ПӖТӖМ ТӖНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПӖРЛЕШӖР!

# КОММУНИЗМ ЯЛАВӖ

Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн Чӑваш обкомӗпе Шупашкар хула комитечӗн тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗпе Шупашкар хула Совечӗн хаҫачӗ

1953 ҫул Ноябрь 10 ЫТЛАРИКУН № 219 (9128) Хакӗ 20 пус. 33-мӗш ҫул тухать.

*Октябрӗнчи Социализмла Аслӑ революци 36 ҫул тултарнине пӗтӗм совет халӑхӗ патриотла пысӑк хаваслӑхпа уявларӗ.*

*Совет Союзӗнчи ӗҫҫыннисем хӑйсен пӗрлӗхне, Коммунистсен партийӗпе Совет правительстви тавра тача пӗтӗҫсе тӑнине кӑтартса пачӗҫ.*

*Сывӑ пултӑр Коммунистсен партийӗн, Совет правительствин тата халӑхӑн никам ҫӗмӗреймӗ пӗрлӗхӗ!*

## ПӖТӖМ ТӖНЧЕРИ МИР ТӖРЕКӖ

Совет халӑхӗпе пӗрле мӗнпур ҫӗршывсенчи ӗҫҫыннисем Октябрӗнчи Социализмла Аслӑ революци 36 ҫул тултарнине саванӑҫлӑн паллӑртрӗҫ. Саванӑҫлӑ кунсенче саманари аслӑ вӑй—пролетарилле интернационализм идейисемпе пӗрлешнӗ пӗтӗм тӗнчери ӗҫҫыннисен пӗрпухӑшлӑхӗ палӑрса тӑрать.

Халӑх демократи ҫӗршывӗсенчи, капитализмла государствӑсенчи рабочисем, хресченсем, интеллигенци совет халӑхне хӗрӳллӗн саламласа, демонстрацисемпе митингсене тухрӗҫ. Мускавра пулса иртнӗ парадпа демонстрацире ют ҫӗршывсен делегацийӗсем нумайӑн пулчӗҫ. Совет правительствипе Коммунистсен партийӗн Центральнӑй Комитетне, Совет Союзӗн ют ҫӗршывсенчи дипломатилле представительствисене сывлӑх суна пиншер туслӑ саламсем килчӗҫ.

Аслӑ Октябрь уявӗн кунӗсенче ӗҫҫыннисем, пӗтӗм прогрессивлӑ этемлӗх совет халӑхне—ҫӗнӗ те пӗрекле пурнӑҫ тӑвакан халӑха, миршӗн паттӑррӑн кӗрешекен халӑха чӗререн юратнине ҫӗнӗ вӑйпа кӑтартса пачӗҫ.

Октябрӗнчи Социализмла Аслӑ революци уявне чысласси тӗнчери демократилле ыхӑмӑн чаплӑ йӑли пулса тӑчӗ. Ҫак демонстрацие султан-сул халӑх ытларах хутшӑнать, миллионшар ҫынсем Совет Союзӗн тусӗсен ретне тӑраҫҫӗ, миршӗн кӗрешме активлӑ хутшӑнаҫҫӗ. Ҫавӑ вӑл Октябрӗнчи Социализмла Аслӑ революци этемлӗх кун-ҫулне пысӑк хӑват парса тӑнине кӑтартать. Российӑра советла революци ҫӗнтерни этемлӗх историйӗнче ҫӗнӗ самана—капитализм ишӗлсе пыракан тата социализмпа коммунизм ҫӗнтерекен самана уҫса пачӗ.

Иккӗмӗш тӗнче вӑрҫинче Совет Союзӗ ҫӗнтернипе тата фашизма ҫӗмӗрсе тӑкнипе Хӗвелтухӑҫ Европӑри чылай ҫӗршывсенчи ӗҫҫыннисем хӑйсен ҫӗршывӗсенче капитализма пӗтерме пултарчӗҫ. Империализма, феодализма хирӗҫ пыракан революцире аслӑ Китай халӑхӗ историллӗ ҫӗнтерӳ турӗ. Тӗнчери социализм аталанӑвӗнче ҫӗнӗ тапхӑр пуҫланчӗ, Совет Союзӗ ертсе пыракан демократипе социализмӑн хӑватлӑ лагерӗ пулса тӑчӗ. Ҫак лагерь пролетарилле интернационализм идейисемпе пӗтӗҫнӗ этемлӗхӗн виҫҫӗмӗш пайне пӗрлештерсе тӑрать.

Аслӑ Китай халӑхӗ ҫӗршыва индустриализацилессишӗн, хӑйӗн экономикине культурине малалла ҫӗклентерессишӗн, халӑх демократи государствине пур майсемпе те тӗреклетессишӗн ӑнӑҫлӑн кӗрешет. Совет Союзӗпе Китай хушшинчи туслӑх Совет Союзӗпе Китай Халӑх Республикинчи халӑхсен ырлӑхӗшӗн, мире тата тӗнчери хӑрушсӑрлӑха ҫирӗплетессишӗн кӗрешес паллӑпа вӑйланса пырать. Империалистла вӑрҫӑ-хуралсене хирӗҫ пынӑ кӗрешӳре хӑйӗн пӗрклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхне хӳтӗлесе хӑварнӑ Демократиллӗ Корея Халӑх Республикин паттӑр халӑхӗ вӑрҫӑ пиштернӗ хуҫалӑха пысӑк ҫӗкленӳпе юсаса ура ҫине тӑратать.

Европӑри халӑх демократи ҫӗршывӗсем шанчӑклӑн малалла пыраҫҫӗ. Совет Союзӗ пуян опычӗпе усӑ курса Польшӑра, Чехословакире, Румынире, Венгрире, Болгарире, Албанире ӗҫҫыннисем халӑх хуҫалӑхне малалла аталантарассишӗн, халӑхӑн материальнӑй пурнӑҫне вӑйлатассишӗн тата культурӑллӑ шайне ӳстерессишӗн, социализмла общество тӑвассишӗн ӑнӑҫлӑ кӗрешеҫҫӗ.

Демократипе социализм лагерӗ пӗтӗм тӗнчери мира сыхласа хӑвармалли тата тӗреклетмелли хӑватлӑ вӑй пулса тӑрать. Ҫак лагере кӗрекен халӑхсем ҫӗнӗ тӗнче вӑрҫи кӑларма тӑрӑшакан вӑйсен сулне хӑватлӑн пӳлсе тӑраҫҫӗ. Демократипе социализм лагерӗнче тӑракан халӑхсен ҫак кунсенче хӑйсем Совет Союзӗ тавра пӗтӗҫсе тӑнине, Ленин—Сталин ялавӗ айне тӑрса Совет Союзӗпе пӗрле малалла ынтӑ хатӗр тӑнине ҫӗнӗ вӑйпа кӑтартса пачӗҫ.

Октябрӗнчи Социализмла Аслӑ революци 36 ҫул тултарнине ют ҫӗршывсенче уявлани ҫакна кӑтартса пачӗ: мире юратакан халӑхсем Совет Союзӗн тулашри мирлӗ политикине ытларах та ытларах шанакан пулчӗҫ. Капиталистла ҫӗршывсенчи нуҫ пулса тӑракан ушкӑнсене Совет Союзне тӗнчери хӗру-тӑрӑва йывӑрлатса пыратьтӑрса айӑплама тата хӑйсен агрессилле политикин мӗн-чӗн сӑлтавӗсене халӑх массинчен пытарса тӑма йывӑртарах пулса тӑрать. Миллионшар ахаль ҫынсем, империалистла ухӑвӑ пропаганда тавӑшӗнче пулнӑ ҫынсем паян тӗнчери йывӑр хӗру-тӑрӑшӑн чӑннипе кам айӑпӗнне, ҫӗнӗ [illegible] авантюрӑсем тума хӑтӗхсемне кам [illegible] тата кӗмӗ майпа усӑ курма тӑрӑшнине [illegible] ӑнланса илме пуҫларӗҫ. Халӑхӑн [illegible] халӑхсен ӗҫне [illegible] [illegible]. Империалистла державӑсенчи пур пулса тӑракан ушкӑнсен [illegible] вӑрҫӑ [illegible] мира хирӗҫ пыракан ҫынсен пуххине. [illegible] вӑрҫӑ кӑларма хатӗрлесес [illegible] халӑхсем хушшинче хирӗҫсем [illegible] политика тытса пыракан ҫынсем пуххине кӑтартса параҫҫӗ.

Ҫӗр ҫинчи пӗтӗм пыракан мӗнпур прогрессивлӑ ҫынсем ҫакна курҫҫӗ: тӗнче[illegible] мир [illegible] хӗру-тӑрӑва ҫемҫетес [illegible] кӗрешекен халӑхсен ҫӗнӗ [illegible] вӑрҫӑ хатӗрлекен вӑйсене хирӗҫ кӗрешес [illegible] пӗрле [illegible] тӑрӑшакан [illegible].

Ҫак политикӑна ҫӗнӗ [illegible] хӗру-тӑрӑва ҫирӗплетессишӗн кӗрешсе [illegible] ытларах ӑнӑҫ тупать: хӗру-тӑрӑва [illegible] вӑрҫӑ [illegible] кӑтартса [illegible].

Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсене ертсе пыракан ушкӑнсен Кореяра пуҫланӑ вӑрҫӑ кӗрешӳшӗн вӑрҫӑ ушкӑнсене пыракан ...

ри хӗру-тӑрӑва ҫемҫетессине хирӗҫ сине тӑрса кӗрешекенсем, тӗнчери хӗру-тӑрӑва йывӑрлатакансем — хӑйсен пысӑк усламисӗшӗн чӗтресе тӑракан Америкӑри агрессиллӗ ушкӑнсем пулса тӑраҫҫӗ. Ҫав ушкӑнсем Корея ыйтӑвне мирлӗ майпа татса пама тата Германи ыйтӑвне демократиллӗ майпа татса пама кансӗрлесе тӑраҫҫӗ, Пӗрлешнӗ Нацисен Организацийӗн Уставне ревизи тума тӑрӑшаҫҫӗ. Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗпе мире юратакан ытти ҫӗршывсене хирӗҫ иртӗхсе ултавлӑ кампани саррасси чарӑнмасть кӑна мар, вӑйланса пырать. Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен правительстви демократиллӗ лагерьти ҫӗршывсенче сӑтӑрла ӗҫсем тума уҫҫӑнах ҫӗршер миллион доллар укҫа уйӑрса парать, укҫа кайсах хӗҫпӑшалланать. Вӑрҫӑ ушкӑнӗсем тӑвать, демократиллӗ лагере кӗрекен ҫӗршывсен чиккисем сывӑхӗнче ҫар базисем нумай тӑвать.

Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсем капитализмла ҫӗршывсене, чи малтан, агрессиллӗ Сурҫӗр Атлантика блокне кӗрекен ҫӗршывсене вӑрҫӑ патне вӑйпа тӗксе пыраҫҫӗ. США-ри пуҫпулса тӑракан ушкӑнсем Германи милитаризмне ҫӗнӗрен ура ҫине тӑратаҫҫӗ. Ҫав ӗҫе вӗсем уйрӑмах Бонн бундестагӗн суйлавӗ хыҫҫӑн вӑйлатма пуҫларӗҫ.

Халӑхсем миршӗн тӑнине шута илмелле пулнӑ пирки, хӗвеланӑҫри державӑсен представителӗсем, татса паман ыйтусем тӑрӑх Совет Союзӗпе калаҫса татӑлма килӗшнипе синчен сахал мар шантарса калаҫҫӗ. Чӑннипе илсен вара вӗсем тӗнчери хӗру-тӑрӑва йывӑрлатакан ӗҫсем туса пыраҫҫӗ, ҫӗнӗ тӗнче вӑрҫине хатӗрлевессине вӑйлатаҫҫӗ.

Анчах та хӗвеланӑҫри державӑсенчи пуҫпулса тӑракан ушкӑнсен халӗ ӗнтӗ тӗнчери вӑйсен шайлашӑвӗнче тӗпрен пулса тӑнӑ улшӑнусене шута илме тивет. Мире хӳтӗлекенсен тӗнчери фрончӗ ӳссе тӗреклентӗ. Хӗрарӑмсен, ҫамрӑксен тата профсоюзсен кӑҫал пулнӑ пӗтӗм тӗнчери конгресӗсен миллионшар ҫынсем миршӗн, хӗҫпӑшалланнине хирӗҫ «кӗрешес ӗҫре пӗрлӗх туса хурас паллӑпа иртрӗҫ. Азире халӑх демократин аслӑ ҫӗршывӗ—Китай Халӑх Республики ҫуралса, туса тӗреклентӗ. Вӑл империалистсене Азирен ҫӗнӗ тӗнче вӑрҫи вучахӗ туса хурас тӗлӗшпе тытса пыракан политикӑна пурнӑҫа кӗртме чарса тӑрать.

Совет Союзӗн тулашри мирлӗ политики—мире сыхласа хӑварас тата ҫирӗплетес политика, ҫӗнӗ вӑрҫӑ кӑларма хатӗрленине хирӗҫ пыракан политика, мӗнпур ҫӗршывсемпе килӗштерсе ӗҫлес тата ӗҫлӗ ҫыхӑнусем тытас политика миршӗн тӑракан мӗнпур ҫынсене мир ӗҫӗ ҫӗнтересси шанса тӑма хӑватлӑ вӑй парать.

Совет халӑхӗ социализм стройӗн пысӑк вӑйӗсемпе хӑйӗн экономикине ҫӗнӗрен пысӑк хӑватпа аталантарассишӗн, культурине чечеклентерессишӗн, халӑх пурнӑҫне малалла лайӑхлатассишӗн, совет общественчӗ пур енӗпе прогресс тӑвассишӗн, ӑна майӗпен коммунизма куҫарассишӗн кӗрешес ӗҫре усӑ курать.

Совет халӑхӗ мирлӗн ӗҫлесе пурӑнать. Коммунистсен партийӗ Октябрь революцийӗн малтанхи кунӗсенчех мир синчен тата халӑхсем хушшинчи туслӑ ҫыхӑнусем туса хурасси синчен пӗлтерчӗ. Вӑл ҫак политикӑна ӗҫре пурнӑҫласа пырать. Совет Союзӗн тулашри политикинчи ҫак тӗп сул-йӗр никам ҫӗмӗреймӗ ҫирӗп пулнӑ, халӗ те ҫавӑн пекех пулса юлать. Совет халӑхӗ ҫакна шутлать: интереслесекен ҫӗршывсем пӗр-пӗринпе калаҫса татӑлнӑ тӑрӑх мирлӗн татса пама пултарайман тавлашуллӑ е татса парайман ыйтусем ҫук.

Совет ҫыннисем мир ӗҫӗшӗн сине тӑрса кӗрешнӗ вӑхӑтрах, вӑрҫӑ кӑларма хатӗрленекенсем тӗлӗшпе сыхӑлӑха ӳстерме кирлине, аслӑ Совет Союзӗн оборонине ывӑнма пӗлмесӗр тӗреклетме тата лайӑхлатма кирлине асра тытаҫҫӗ. Совет халӑхӗн кучӳхнеки пур йышши ҫар техники те пур. Ҫав вӑхӑтрах вӑл никама та хӑратмасть тата хӑратмасть те. Вӑл халичченхи пекех хӗҫпӑшалсене чылай чакарассишӗн, атомлӑ, бактериллӗ хӗҫпӑшалсемпе тата ҫынсене массӑллӑн пӗтерекен ытти йышши хӗҫпӑшалсемпе усӑ курассине чарса хуртасси синчен хӑвӑртрах килӗшӳсем тума тӑрӑшать.

Совет Союзӗ тунӑ ситӗнӳсемпе мӗнпур ҫӗршывсенчи ӗҫҫыннисем савӑнаҫҫӗ. Совет Союзӗ вӗсем мирпе наципллӗ никама пӑхӑнманлӑхӗн тӗрекӗ, этемлӗхӗн сутӑ малашлӑхӗшӗн кӗрешмелли аслӑ тӗслӗхӗ вырӑнне хурса шутлаҫҫӗ.

Совет халӑхӗ миршӗн кӗрешни тӗнчери мӗнпур ҫӗршывсенчи миллионшар ҫынсене хавхалантарать, демократипе социализмӑн хӑватлӑ лагерьне пӗтӗҫтерет. Тӗнчери хӗру-тӑрӑва ҫӗмҫетессишӗн, мирӗшӗн, ҫӗнӗ тӗнче вӑрҫи кӑларма тӑрӑшакан агрессиллӗ вӑйсене хирӗҫ кӗрешес ӗҫре халӑхсен пӗрлӗхӗ тӗреклене пырать. Миршӗн тӑракансен речӗсем ӳсеҫҫӗ тата пӗтӗҫеҫҫӗ.

Сывӑ пултӑр халӑхсем хушшинчи мир!

(«ПРАВДА» хаҫатӑн ноябрӗн 9-мӗшӗнчи ҫтатьинчен).

## Мускаври Хӗрлӗ площадьри парадпа демонстраци

Октябрӗнчи Социализмла Аслӑ революци 36 ҫул тултарнине Совет ҫӗршывӗ политикӑлла пысӑк ҫӗкленӳпе, ӗҫри пысӑк хастарлӑхпа, коммунизм патне пымалли ҫул синче чаплӑ ситӗнӳсем тунӑ ларутӑрура уявларӗ.

Совет ҫӗршывӗн столици 1953 ҫулхи ноябрӗн 7-мӗшӗнчи ирхине уйрӑммӑнах чаплӑ та илемлӗ. Хулан магистралӗсемпе урамӗсене уяв чухнехи пек илемлетнӗ. Суртсем синче КПСС Центральнӑй Комитечӗ Октябрь уявӗ ячӗпе чӗнсе каланисем ҫиҫсе тӑраҫҫӗ. Ялавсем вӗлкӗшеҫҫӗ. Урамсене чечексем, хӗрлӗ транспарантсем йӑтса тухнӑ, капӑр тӑхӑннӑ ҫӗршер пин ҫынсем ҫине пӑхсан, кӗркунне пек те туйӑнмасть. Мускав ҫийӗн телей юррисем, ӗҫпе мир юррисем янӑраҫҫӗ!

Хӗрлӗ площадь—уявсем иртмелли вырӑн—мӑнаҫлӑ та илемлӗ. ГУМ-ӑн фасачӗ ҫинче — хӗрлӗ хӑмачсем. Центрта—Коммунистсен партине туса хунӑ генилле ҫыннӑн тата ӑслӑ ҫулпуҫӑн В. И. Ленинӑн, унӑн вӗренекенӗн тата унӑн ӗҫне малалла туса пынӑ аслӑ И. В. Сталинӑн барельефӗ. Совет Союзӗн пиллӗк пысӑк Гербӗ айӗнче—тӑвансла вунултӑ республикӑн гербӗсем.

Парад пуҫланиччен шутлӑ минутсем юлаҫҫӗ. Кремль стени гранит трибунисем ҫинче—Мускаври фабрикӑсемпе заводсенчи малта пыраксем, производствӑри новаторсем, наукӑпа искусство ҫыннисем, министрсем, СССР тата РСФСР Верховнӑй Совечӗсен депутачӗсем. Уйрӑм ложӑсенче—дипломатилле корпусӑн представителӗсем, ҫар атташисем. Кунтах — ют ҫӗршывсенчен килнӗ йышлӑ хӑнасем, Октябрь уявне иртерме килнӗ ют ҫӗршывсенчи общественноҫӑн представителӗсем.

Хӗрлӗ площадьре тата унтан аякра — Истори Музейӗ патӗнче, Манеж патӗнче, Горький урамӗнче, Охотнӑй рядра ҫар чаҫӗсем тӑрса тухнӑ.

Ленин—Сталин мавзолейӗн трибуни ҫине партипе Правительство руководителӗсем Г. М. Маленков, В. М. Молотов, Н. С. Хрущев, К. Е. Ворошилов, Л. М. Каганович, А. И. Микоян, М. З. Сабуров, М. Г. Первухин, Н. М. Шверник, П. К. Пономаренко, М. А. Суслов, П. Н. Поспелов, Н. Н. Шаталин, М. Ф. Шкирятов юлташсем, Маршалсем, Совет Союзӗн Хӗҫпӑшаллӑ Вӑйӗсен генералӗсемпе адмиралӗсем хӑпараҫҫӗ. Хӗрлӗ площадьри хӑнасем вӗсене тӑвӑллӑн алӑ ҫупса кӗтсе илеҫҫӗ.

Ирхине шӑп 10 сехетре, Кремль сехечӗ пӗррремӗш хут ҫапнӑ вӑхӑтра, Спасски башня хапхинчен уҫӑ автомобиль ҫинче СССР Оборона Министрӗ, Совет Союзӗн Маршалӗ Н. А. Булганин тухать. Парад командующийӗ арми генералӗ К. С. Москаленко ӑна хирӗҫ пырать. Машинӑсем площадь варринче чарӑнаҫҫӗ. Н. А. Булганин, рапорт йышӑннӑ хыҫҫӑн, парад командующийӗпе пӗрле ҫарсем умӗпе иртсе пырса, салтаксемпе матроссене, сержантсемпе старшинасене, офицерсене, генералсемпе адмиралсене сывлӑх сунать, вӗсене Октябрӗнчи революци 36 ҫул тултарнӑ ятпа саламлать. Оборона министрӗ саламлани ҫине хӑватлӑн «урра» кӑшкӑрса ответлени илтӗнсе каять. Оркестрсем встречнӑй марш кӗввипе калаҫҫӗ. Ҫарсене пӑхса тухнӑ вӑхӑтра, Мавзолей умӗнче пин трубӑран йӗркеленӗ ҫар оркестрӗ тӑрса тухать. Оркестра Петров полковник дирижер пулса ертсе пырать.

Ҫарсене пӑхса тухнӑ. Хӗрлӗ площадьре Глинкӑн «Славься» ятлӑ чуна ҫӗклекен кӗвви—вырӑс халӑхне саламлакан гимн кӗвви шӑранать!

Булганин юлташ Мавзолей трибуни ҫине хӑпарать. Хӗрлӗ сунатлӑ ылтӑн тӗслӗ вӗсен кайӑксем евӗрлӗ, вымпеллӑ фанфарӑсем ҫӗкленеҫҫӗ, ҫакӑн пек сигнал янӑрать:

«Пурте итлӗр!»

Радио тӑрӑх саланакан ҫак сигнал пирӗн вӗҫӗ-хӗррисӗр сарлака Тӑван ҫӗршывӑн мӗнпур кӗтесӗсенче янӑрать. Пурте итлӗр, Хӗрлӗ площадь калаҫать, Мускав калаҫать, совет халӑхӗ калаҫать! Ӑна Китайра, Вьетнамра, Корейӑра, Европӑри халӑх демократи ҫӗршывӗсенче итеҫҫӗ. Ҫак минутра кунта, Кремль стенисем патне ҫӗр чӑмӑрӗн мӗнпур кӗтесӗсенчен куҫа курӑнман йӗрсем тӑсӑлаҫҫӗ. СССР Оборона Министрӗ Маршал Н. А. Булганин сӑмах калать.

### Совет Союзӗн Маршалӗ Н. А. Булганин каланӑ сӑмах

Юлташсем — салтаксемпе матроссем, сержантсемпе старшинасем!

Юлташсем — офицерсем, генералсемпе адмиралсем!

Совет Союзӗнчи ӗҫҫыннисем!

Урӑх ҫӗршывсенчен килнӗ хаклӑ хӑнасем!

Совет Правительствипе Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн Центральнӑй Комитечӗ ячӗпе сире Октябрӗнчи Социализмла Аслӑ революци 36 ҫул тултарнӑ ятпа саламласа ырӑ сунатӑп.

Ҫак ҫул Совет Союзӗ халӑх хуҫалӑхӗнче, наукӑпа культурӑн мӗнпур отраслӗсенче пысӑк ситӗнӳсем тунӑ ҫул пулса тӑрать. Ҫак ҫулта совет халӑхӗ Коммунистсен партийӗпе, унӑн Центральнӑй Комитечӗ тавра, хӑйӗн Правительстви тавра тата тачӑрах пӗтӗҫрӗ. Нумай нациллӗ пирӗн ҫӗршыври халӑхсен туслӑхӗ тата ытларах ҫирӗпленчӗ. Совет государстви тата ытларах тӗреклентӗ.

Иртнӗ ҫул хушшинче пирӗн урӑх ҫӗршывсенчи туссем — Хӗвеланӑҫӗнчи тата Хӗвелтухӑҫӗнчи демократилле лагерьти ҫӗршывсем — хуҫалӑхпа культура строительствинче пысӑк ситӗнӳсем турӗҫ.

Ҫавна пула пирӗн социализмпа демократи лагерӗ тата вӑйларах та хӑватлӑрах пулса тӑчӗ.

Совет Союзӗнчи ӗҫҫыннисем хӑйсен пӗтӗм халӑх праҫникне—Аслӑ Октябрь 36 ҫул тултарнине паян политикӑлла тата ӗҫри ҫӗкленӳпе кӗтсе илеҫҫӗ. Партипе Правительство халӑх хуҫалӑхне малалла аталантарас тата халӑха кулленхи кирлӗ таварсем туса кӑларассине ӳстерес ыйтусем тӑрӑх юлашки вӑхӑтра йышӑннӑ решенисем хыҫҫӑн политикӑлла тата ӗҫри ҫӗкленӳ уйрӑммӑнах ӳсрӗ.

Ҫак пиллӗк пахи решенисене пурнӑҫласан ситес икӗ-виҫӗ ҫул хушшинчех ӗҫҫыннисене апат-ҫимӗҫпе промышленность таварӗсем парса тӑрассине чылай лайӑхлатать, колхоз хресченӗсен пурнӑҫ шайне ӳстерет, пирӗн Совет государстви тата ытларах тӗреклентет. Ҫавӑнпа та ӗнтӗ пирӗн Тӑван ҫӗршыври ӗҫҫыннисем Партипе Правительствӑн аслӑ решенийӗсене пурнӑҫласа пырассишӗн сине тӑрса кӗрешмелле, ҫакна майпа пирӗн халӑх хуҫалӑхне [illegible] [illegible].

Тулашри политика енӗпе, [illegible] пирӗн Правительство пӗр хутчен кӑна мар калани[illegible] пурне те паллӑ, Совет Союзӗ мира сыхласа хӑварассишӗн тата ҫирӗплетессишӗн, пӗтӗм тӗнчери мӗнпур хирӗҫӳсене татса парассишӗн калаҫса тӑрӑшнӑ, халӗ те тӑрӑшать.

Совет Правительстви пӗтӗм тӗнчери йывӑр хӗру-тӑрӑва ҫемҫелатма тӗлӗшпе пысӑк пурне те паллӑ ӗҫсем ҫак тӗлӗшсемпе ҫыхӑнса тӑраҫҫӗ те ӗнтӗ. Ҫак ӗҫсем синче ответлесе, хӗвеланӑҫри державӑсем ялавах малтанлӑха тӑрлӗрен условисем кӑларса тӑратаҫҫӗ. Ҫав условисем, чӑннипе илсен, мира ҫирӗплетес тата пӗтӗм тӗнчери хӑрушсӑрлӑха ҫирӗплетмелли интересӗсемпе сыхӑнса тӑмаҫҫӗ. Ҫав вӑхӑтрах Европӑри чылай государствӑсен территорийӗсенче, Совет Союзӗпе халӑх демократи ҫӗршывӗсен чиккисем сывӑхӗнче, Америкӑн ҫар базисене ҫӗнӗрен те ҫӗнӗрен тӑваҫҫӗ. Ют ҫӗршывсенчи хаҫатсем агрессиллӗ Сурҫӗр Атлантика блокӗнчи ҫарсен вӗренӗвӗпе маневрӗсем синчен тӑтӑшах пӗлтерсе тӑраҫҫӗ. Ҫав вӗренӳпе маневрсене, план тенӗ пекех, Америка генералӗсем ертсе пынипе туса иртереҫҫӗ.

Ҫак условисенче пирӗн Правительство, Совет государствин хӑрушсӑрлӑхне тӑвас тесе, пирӗн Хӗҫпӑшаллӑ Вӑйсене ҫирӗплетессишӗн тивӗҫлипе тӑрӑшмасӑр тӑма пултараймасть.

Совет Ҫарӗпе Тинӗс-Ҫар Флотӗн воинӗсем кӑҫал хӑйсен ҫар ӑсталӑхне малалла ӳстерсе пычӗҫ. Нумаях пулмасть Совет Ҫарӗн кӗркунехи вӗренӑвӗпе маневрӗсем вӗҫленчӗҫ, вӗсене пирӗн ҫӗршывӑн тӗрлӗ районӗсенче иртернӗ. Кӑҫалхи ҫар вӗренӗвӗн вӗҫӗ пулса тӑракан ҫак маневрсемпе вӗренӳсенче ҫӗр ҫинчи ҫарсем, сывлӑшри десант ҫарӗсем, сывлӑш-ҫар тата тинӗс-ҫар вӑйӗсем хутшӑннӑ.

Ҫар вӗренӗвӗпе маневрсене тӗрлӗ вырӑнта тата тӗрлӗ условисенче иртернӗ. Вӗсем унта хутшӑннӑ ҫарсене пысӑк усӑ пачӗҫ. Вӗсем ҫар ӗҫне мӗнле хатӗрленнине тата вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи пек лару-тӑрура кучӳхнеки хӗҫпӑшалпа мӗнле усӑ курма пултарнине тӗрӗслеме май пачӗҫ.

Тинӗс-ҫар вӑйӗсем хӑйсен вӗренӑвне ҫар карапӗсемпе Польшӑри, Румынири тата Болгарири портсене похода кайнипе вӗҫлерӗҫ. Ҫав карапсем вӑл портсене туслӑх ячӗпе пынӑ. Ку походсем пирӗн ҫар моряксем тинӗс-ҫар ӗҫне питӗ лайӑх вӗреннине кӑтартса пачӗҫ.

Вӗренӳпе маневрсем ҫакна кӑтартса пачӗҫ: пирӗн Хӗҫпӑшаллӑ Вӑйсем, Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑн пуян опычӗпе усӑ курса тата чи ҫӗнӗ ҫар техникипе тата [illegible] хӗҫпӑшалпа усӑ курма [illegible] вӗренсе, хӑйсен ҫар ӑсталӑхне ӳстерес тӗлӗшпе сахал мар ӗҫ туса иртерчӗҫ. Чи ҫӗнӗ ҫар техникипе ҫӗнӗ хӗҫпӑшалӑ пирӗн Правительство тӑрӑшнипе пулса тата ученӑйсемпе инженерсем, конструкторсем промышленность работникӗсем ҫине тӑрса тӑрӑшнипе пулса тума пултарнӑ.

Юлташсем!

Эпир коммунизм патне хӑюллӑн малалла кайса пыратпӑр. Пирӗн мухтавлӑ Коммунистсен партийӗ пирӗн Тӑван ҫӗршыври ӗҫҫыннисене ҫур йӗр хушши ӗнтӗ пӗр ҫӗнтерӳрен тепӗр ҫӗнтерӳ патне ертсе пырать. Коммунистсен партийӗпе унӑн Центральнӑй Комитечӗ ӑслӑн ертсе пынипе—пирӗ ситӗнӳсем тума май паракан тӑтӑшлӑ условисем пулса тӑрать. Маркс—Энгельс—Ленин—Сталин ялавӗ айӗнче эпир хӑюллӑн та шанчӑклӑн малалла пыратпӑр, эпир ханӑрӑн ӗҫе никам та ҫӗнтерейменнине лайӑх пӗлетпӗр.

Сывӑ пултӑр Октябрӗнчи Социализмла Аслӑ революци 36 ҫул тултарни!

Сывӑ пултӑр паттӑр совет халӑхӗ тата унӑн мухтавлӑ Хӗҫпӑшаллӑ Вӑйӗсем!

Сывӑ пултӑр Совет Правительстви!

Сывӑ пултӑр Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗ—пирӗн мӗнпур ҫӗнтерӳсен хавхалантаракан тата организаторӗ!

Урра!

* * *

Площадьре «Урра!» кӑшкӑрни аслати пек кӗрлесе каять.

Маршал туха каланӑ сӑмах ҫине ҫарсем ҫавӑн пек ответлеҫҫӗ. Маршал каланӑ сӑмахра совет ҫыннисем миршӗн, тӗнчери ҫӗршывсем хушшинче килӗштерсе ӗҫлессишӗн тӑнине, мире ҫирӗплетес тӗллевпе Совет Государствин вӑй-хӑватне тӗреклетессишӗн тӑнине татах та тепӗр хут уҫҫӑн кӑтартса панӑ. Пирӗн ҫӗршывӑн сутӑ та савӑнӑҫлӑ пуласлӑхне палӑртса, Ленинпа Сталинӑн аслӑ ӗҫӗн тӗрӗслӗхне ҫирӗп ӗненсе тӑнине палӑртса, площадьре Совет Союзӗн Гимнӗ янӑрать. Кремль стени хыҫӗнче тупӑсенчен пӗр харӑс персе салют пани илтӗнет.

Фанфарӑсен сассисем ҫарсен чаплӑ маршӗ пуҫланни синчен пӗлтереҫҫӗ.

Пирӗн мухтавлӑ воинсем, Совет Ҫарӗн хӑватне кӑтартса, Хӗрлӗ площадь урлӑ пӗррремӗш хут иртеҫҫӗ. Анчах та вашин хутӗнчех ҫав чаплӑ картинӑна курзакансене парад ҫӗнӗлле хумхантарать.

Иниҫер ҫынсем Истори музейӗ енчен пӑхаҫҫӗ. Ҫав енчен М. В. Фрунзе ячӗпе тӑракан, Хӗрлӗ ялавлӑ, Ленин орденлӗ, пӗррремӗш степень Суворов орденлӗ Ҫар Академийӗнче вӗренекенсен пӗрлештернӗ батальонӗсем утса пыраҫҫӗ. Офицерсен батальонӗсем металран шӑратса тунӑ тӑватькалсем пек, иртсе пыраҫҫӗ. Тӑван ҫӗршывӑн нумай ҫапӑҫусенче пулнӑ ҫынсем пыраҫҫӗ.

Вӑтӑр пилӗк ҫул каялла—1918 ҫулхи декабрӗн 8-мӗшӗнче, В. И. Ленин пуҫарнипе—ҫак Ҫар академине уҫнӑ. Ҫак Академире легендарлӑ герой Чапаев, мухтавлӑ полководецсем—Совет Союзӗн Маршалӗсем чылайӑшӗ вӗреннӗ.

Совет Ҫарӗн бронетанковӑй тата механизированнӑй войскисен И. В. Сталин ячӗпе тӑракан, Ленин орденлӗ Ҫар Академийӗнче вӗренекенсем иртсе пыраҫҫӗ. Танкистсен петлицисем ҫинче — хӑватлӑ машинӑсен ылтӑн силуэчӗсем. Пирӗн воинсем-танкистсем совет танкӗсемпе Европӑри нумай халӑхсене фашистла пусмӑртан ирӗке кӑларчӗҫ. Ҫавӑнпа та ӗнтӗ пирӗн хӑнасем—халӑх демократи ҫӗршывӗсенчи туссем трибунӑсем ҫинчен танкистсен речӗсене хытӑ хӗпӗртесе алӑ ҫупса саламлаҫҫӗ.

«В защиту Родины» ятлӑ ҫар маршӗн кӗввипе Совет Союзӗн вуншар геройӗсем — офицер-летчиксем, пограничниксем—пирӗн Тӑван ҫӗршывӑн хӑюллӑ часовойӗсем, Хӗрлӗ Ҫарӑн легендарлӑ комиссарӗсен традицийӗсене тытса пыракан политработникӗсем иртсе пыраҫҫӗ. Гранит трибунӑсем ҫинче тӑракансем вӗсем ҫине савӑнса пӑхаҫҫӗ.

Хӗрлӗ площадьре Мускаври РСФСР Верховнӑй Совечӗ ячӗпе тӑракан Хӗрлӗ Ялавлӑ пехота училищин курсанчӗсем тухаҫҫӗ. Пурте ҫуллӑ, вӗсем аллисенчи винтовкисене ҫирӗп тытса утса пыраҫҫӗ. Ҫак училище Совет Ҫарне нумай командирсем хатӗрлесе панӑ. Унӑн курсанчӗсем совет халӑхӗн ҫапӑҫусенчи паттӑр ӗҫӗсен историйӗн мухтавлӑ страницисене ҫырнӑ.

Площадьре ҫар морякӗсем тухаҫҫӗ. Социализмла государствӑн тинӗс чиккисене сыхлакансем ҫапӑҫӑва хатӗр тӑнине кӑтартса пама ку хутӗнче Балтика морякӗсем тивӗҫлӗ пулнӑ.

Пӗр минутлӑха площадь пушанса юлать. Унтан моторсем кӗрлени илтӗнсе каять. М. И. Калинин ячӗпе тӑракан, Хӗрлӗ Ялавлӑ, Суворов орденлӗ Таманска гвардейски стрелковӑй дивизи иртсе пырать. Боецсем хурсӑ каскӑсем тӑхӑннӑ, аллисене автоматсем тытнӑ, вӗсем ҫирӗп броньпа витнӗ машинӑсем ҫинче ларса пыраҫҫӗ.

Ҫынсем мухтавлӑ гвардеецсем ҫине пӑхаҫҫӗ. Вӗсене алӑ ҫупса саламлаҫҫӗ.

Гвардеец-пехотинецсемпе Кирттӑ пек, пӑхӑтра гвардеец-летчиксем реактивлӑ самолетсем ҫинче питӗ хӑвӑрт вӗҫсе иртеҫҫӗ.

Ҫӗр ҫинчи парад сывлӑшри парадпа пӗрлешет. Флагман карапӗ хыҫҫӑн площадь ҫийӗпе реактивлӑ самолетсем питӗ пысӑк [illegible] ушкӑнӑн-ушкӑнӑн иртсе каяҫҫӗ. Кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫ енчен [illegible] реактивлӑ истребительсем хӑвӑрт иртсе каяҫҫӗ. [illegible] [illegible] машинисем пӗр арене иртсе каять. [illegible] [illegible] [illegible] иртсе [illegible] Машинӑсене хӑюллӑ летчиксем: Соколов, Петров, Сычев, Жуков тата истребительсен [illegible] [illegible] ытти летчиксем тытса пыраҫҫӗ.

...Хӗрлӗ площадьре ҫар [illegible] [illegible] кӗреҫҫӗ. Трибунӑсем умӗнче [illegible] иртеҫҫӗ, вӗсен моторӗсем кӗрлеҫҫӗ. Машинӑсем ҫинче борчӗсем ҫинче [illegible] пехотинецсем [illegible] — ҫуначӗсемпе парашют ӳкерни. Кусем вӗсем—десантникӗсем. Вӗсен аллисенче — автоматсем, сӑмӑл пулеметсем, ҫурӑмӗсем хыҫӗнче—парашютсен ранецӗсем.

Тӑвӑл сывлӑшӗ пек кӗрлесе каять. Площадьре хӑватлӑ совет артиллерийӗ тухать. Хӑватлӑ «эксесемпе» тягачсенчен кӑкарнӑ тупӑсем, гаубицӑсем, минометсем, зениткӑй установкӑсем иртеҫҫӗ.

Совет артиллерийӗ — пирӗн Ҫарӑн хӑватлӑ вӑйӗ маршӗ ҫар техники тӗрлӗ тата хӑватлӑ пулнине кӑтартса парать.

Сывлӑшра тата ҫӗр ҫинче машинӑсем иртнӗ чухне трибунӑсем ҫинче мухтаса каласни илтӗнет. Летчиксен, артиллеристсен ӑсталӑхне ырласа, мухтавлӑ техникӑна мухтаса, совет ҫыннисем тата пирӗн хӑнасем — Китайран, Демократиллӗ Корея Халӑх Республикинчен, халӑх демократи ҫӗршывӗсенчен килнӗ туссем, капитализмла ҫӗршывсенчи ӗҫҫыннисен делегацийӗсем алӑ ҫупаҫҫӗ. Совет Ҫарӗн хӑвачӗ мир шанчӑкӗ пулнине вӗсем пӗлеҫҫӗ. Парадра суворовски тата нахимовски ҫар училищисенче вӗренекенсем хутшӑннӑ. Ҫамрӑксем — пулас офицерсем, генералсем тата адмиралсем — ҫирӗп те илемлӗн утса пыраҫҫӗ. Ку ҫамрӑксем вырӑс полководецӗсен мухтавлӑ ӗҫӗсене малалла туса пыма вӗренеҫҫӗ. Ҫамрӑксем хушшинче пӗрре, аслӑ флотоводец Нахимовӑн тӑваттӑмӗш сыпӑкри ачи—Александр Нахимов комсомолец пырать.

...Хӗрлӗ площадьри парада Мускав гарнизонӗнчи ҫар музыкачӗсен пӗрлештернӗ оркестрӗ вӗҫлет.

Ҫар парачӗ 45 минута пынӑ. Совет воинӗсем хӑйсем ҫирӗп дисциплинӑллӑ, организованнӑй пулнине, ҫар ӗҫне питӗ лайӑх вӗреннине кӑтартса панӑ.

* * *

Ҫар парачӗ иртрӗ. Таҫта, Москворецки кӗпер енчен ҫар машинисен шавӗ шӑпланать. Хӗрлӗ площадье Истори музейӗ енчен демонстрантсен колоннисем пырса кӗреҫҫӗ.

Уяв ячӗпе пухӑннӑ демонстрацие физкультурниксен нумай пин ҫынлӑ отрячӗ пуҫлать. Вӑйлӑ та хӑюллӑскерсем, ӗҫре вӗсем тата вӗренӳре хастарлӑскерсем, вӗсем совет ҫыннисен—коммунизм строителӗсен телейлӗ ҫамрӑклӑхне кӑтартаҫҫӗ.

Колонна ҫийӗнче ҫӳлте тытса пыракан СССР Союзӗн Государство гербӗн ылтӑн пучахӗсем хӗвел ҫинче йӑлкӑшаҫҫӗ. Унӑн йӗри-тавра—хӗрлӗ ялавсем, вӗсем ҫине вунултӑ союзлӑ республикӑн гербӗсене ӳкернӗ. Партипе правительство руководителӗсене саламласа, ҫамрӑксем пиншер чечек ҫыххисем ҫӗклесе иленҫҫӗ. Вӗсем пӗр харӑс кӑшкӑраҫҫӗ:

— Совет Союзӗнчи Коммунистсен партине—Мухтав! Мухтав! Мухтав!

Площадьре, тинӗс хумӗ пырса ҫапӑннӑ евӗр пек, «Урра!» тенӗ сасӑ кисренсе илет. Ҫав вӑхӑтра Мавзолей тӑлӗнчен ялан ҫӗкленсен колонни иртет, унта 1.500 ҫын! Чи малта—Ленин орденӗпе илемлетнӗ Мускав ялавӗ.

Площадье Мускаври ӗҫҫыннисем пырса кӗреҫҫӗ. Станкостроительсемпе текстильщиксем, металлургсемпе ялхуҫалӑх машини тӑвакансем, чугун ҫул ҫинче ӗҫлекенсем, ученӑйсем, культура ҫыннисем, учительсем, студентсем пыраҫҫӗ.

Манифестантсен колоннисем наукӑлла коммунизм никӗсне хывнӑ ҫынсен—Маркс, Энгельс, Ленин, Сталин портречӗсене ҫӗклесе пыраҫҫӗ. Ӗҫҫыннисем партипе Совет Правительствин руководителӗсен—Г. М. Маленков, В. М. Молотов, Н. С. Хрущев, К. В. Ворошилов, Н. А. Булганин, Л. М. Каганович, А. И. Микоян, М. З. Сабуров, М. Г. Первухин портречӗсене тытса пыраҫҫӗ.

Площадь тӑрӑх пӗр вӑхӑтрах Мускаври вунпӗр районтан—Ленински, Кировски, Краснопресненски, Советски, Молотовски тата ытти районсенчен килнӗ ӗҫҫыннисем, юхса пыраҫҫӗ. Транспарантсем ҫинче парти чӗнсе каланине ылтӑн саспаллисемпе ҫырнӑ:

«Октябрӗнчи Социализмла Аслӑ революци 36 ҫул тултарни сывӑ пултӑр!»

Ленински районӑн колонни пуҫӗнче [illegible] ученӑйсем, СССР Наука академийӗн коллективӗ.

Демонстрантсен хушшинче Мускаври станкостроительӗсем, чи малта—«Красный пролетарий» завод коллективӗ. Ку предприяти МТС-сем валли токарнӑй станоксен 1 200 [illegible]. Орджоникидзе ячӗпе тӑракан «Станкостроительсем» тата ытти заводсенчен килнӗ [illegible] сем тухаҫҫӗ. Ҫак машинӑсене Сибирьте, Уралта, Грузире, Украинӑра [illegible] валли кӑларассине туртаҫҫӗ.

(Малалли 2-мӗш страницӑра).

# Мускаври Хӗрлӗ площадьри парадпа демонстраци

(Юлашки).

Первомайски районӗн колоннинче Мускаври «Серп и молот» заводра ӗҫлекен металлургсем. Ҫулталӑк пуҫланнӑранпа вӗсем ҫӗршыва планран ирттерсе вунӑ пин тонна ытла хурҫӑ тата прокат шӑратса панӑ.

Ҫывӑр промышленность аталанни халӑха кирлӗ таварсем туса кӑларассине тӑтӑшлӑ ӳстерме условисем туса пачӗ. Халӑха кирлӗ таварсем туса кӑларассине хӑвӑрт ӳйлатас, ССР Союзӗнчи халӑхсен пурнӑҫне малалла лайӑхлатас тӗлӗшпе СССР Верховнӑй Совечӗн пиллӗкмӗш сессийӗ тата Коммунистсен партийӗн Центральнӑй Комитечӗн сентябрьти Пленумӗн историллӗ решенийӗсене рабочисем, колхоз хресченӗсем, совет интеллигенцийӗ пысӑк ҫӗкленӳпе йышӑнни Октябрь праҫникне тухнӑ колоннӑсене илемлетниничен те палӑрса тӑрать. Обществӑн пӗрмай ӳссе пыракан материальнӑй тата культурӑллӑ ыйтӑвӗсене чи тулли тивӗҫтерессии — социализмӑн экономикӑлла тӗп законӗ пулса тӑрать.

Халӑх хуҫалӑхне малалла аталантармалли пысӑк программӑна пурнӑҫлас ӗҫре ҫӗнтерӳсем тунӑ ҫинчен Мускав ҫыннисем савӑнса рапортлаҫҫӗ. Вӗсем паян пирӗн ҫӗршыв ҫитӗнӳсем тунишӗн уйрӑмах савӑнаҫҫӗ.

Пир-авӑр тӗртекенсем ҫӗклесе пыракан транспарантсем ҫинче ҫапла ҫырнӑ:

— Пурҫӑн пир-авӑр туса кӑларас тӗлӗшпе промышленность 1955 ҫул валли планланӑ шая ҫитрӗ.

— Ҫӑм пир-авӑр, ҫӗленӗ япаласем, трикотаж изделийӗсем туса кӑларас енӗпе пиллӗк ҫуллӑх план тӑватӑ ҫулта тулать.

...Роза, мак, хризантема чечексенчен тунӑ ҫыхӑсем куҫа илӗртекен, тӗрлӗ тӗслӗ пир-авӑрсемпе пӗрле тӗлӗнмелле ялкӑшаҫҫӗ. «Трехгорная мануфактура» комбинатӗнчи рабочисемпе работницӑсем иртсе пыраҫҫӗ.

А. И. Микоян ячӗпе тӑракан апат-ҫимӗҫ комбинатӗнче, «Красный Октябрь», «Большевик» кондитер фабрикисенче ӗҫлекенсем ҫӗршывра апат-ҫимӗҫ туса кӑларас ӗҫре мӗнле ӳсӗм тунине тата малашне мӗнле задачӑсем тӑнине ҫинчен ҫырнӑ транспарантсем ҫӗклесе пыраҫҫӗ.

Халӑх валли апат-ҫимӗҫ тата ҫӑмӑл промышленность валли чӗртавар пиҫӗ нумай туса хатӗрлес ӗҫ ялхуҫалӑхӗнчен нумай килет. Демонстрантсем ҫӗклесе пыракан панносемпе плакатсем ҫинче Мускав облаҫӗнчи колхозсемпе совхозсем тата МТС-сем тунӑ ҫитӗнӳсене кӑтартнӑ. Вӗсем хушшинче «Память Ильича», Молотов ячӗпе тӑракан колхозсем, «Лесные поляны» тата Горькин ячӗпе тӑракан совхозсем, Раменски МТС-ӗ.

Демонстрантсем хушшинче ҫӗршывра ялхуҫалӑх кадрӗсем хатӗрлекен чи ватӑ аслӑ шкулӗн Тимирязев ячӗпе тӑракан Академин преподавателӗсемпе студенчӗсем. Совет влаҫӗн ҫулӗсенче ку академи пиншер специалист вӗрентсе кӑларнӑ. Халӗ вӗсем ялхуҫалӑхӗн кашни отраслӗнче, колхозсемпе совхозсенче тата МТС-сенче ӗҫлеҫҫӗ.

Халӑха кирлӗ таварсем туса кӑларасси ӳснипе пӗрлех тавар ҫаврӑнӑшӗ анлӑ сарӑлса пырать. Центральнӑй универмагпа ытти суту-илӳ предприятийӗсенче ӗҫлекенсен колоннисем ҫине пӑхсан, совет суту-илӳ работникӗсем хӑйсен умӗнчи ҫӗнӗ задачӑсене пурнӑҫа кӗртме хатӗр пулни курӑнать.

Площадь тӑрӑх Ленинградски, Сталински, Октябрьски, Сокольнически, Фрунзенски тата столицӑри ытти районсенчи ӗҫҫыннисем иртсе пыраҫҫӗ.

Чечексемпе хӗрлӗ ялавсем хушшинче Совет влаҫӗн чи малтанхи декречӗн сӑмахӗсене ҫырнӑ панно курӑнать. Ку вӑл — мир ҫинчен кӑларнӑ декрет. Ҫавӑн хыҫҫӑн пирӗн государство пӗр улшӑнмасӑр мир политикине тытса пырать. Халӗ те, Аслӑ Октябрь праҫникӗ кун, Совет Союзӗнчи ӗҫҫыннисем миршӗн, демократишӗн, социализмшӑн кӗрешекен мӗнпур халӑхсене тӑванла саламлаҫҫӗ. Вӗсем пӗтӗм чунтан кӑмӑлласа ҫапла калаҫҫӗ:

— Сывӑ пултӑр халӑхсем хушшинчи мир!

Совет ҫыннисем ҫак чаплӑ уяв кунӗ халӑх хуҫалӑхне малалла ҫӗклентерессишӗн, халӑхӑн материальнӑй пурнӑҫне малалла лайӑхлатассишӗн тата культурӑллӑ шайне ӳстерессишӗн, социализмлӑ общество тӑвассишӗн анҫӑлӑ кӗрешекен халӑх демократи ҫӗршывӗсенчи ӗҫҫыннисене тӑванла саламлаҫҫӗ. Совет халӑхӗ халӑх демократи ҫӗршывӗсемпе тытакан ҫирӗп туслӑха малалла та тӗреклетсе пыма хатӗр тӑни ҫинчен пӗлтерет.

Демонстрантсем Китай Халӑх Республикин, Польша, Чехословаки, Болгари, Венгри, Румыни, Албани, Монголи Халӑх Республикин, Демократиллӗ Германи Республикин, Демократиллӗ Корея Халӑх Республикин руководителӗсен портречӗсене йӑтса иртеҫҫӗ.

Хӗрлӗ площадь урлӑ строительсем, столица ҫӑн-ҫӑпатне улӑштарса ҫӗнетекенсем, иртсе пыраҫҫӗ. Вӗсем Мускава ҫӗр ҫинчи чи илемлӗ хула туса хурассишӗн тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ.

Тӗнчере пӗр хула та пирӗн тӑван столица пек пысӑккӑн та хӑвӑрттӑн ӳссе пыни, тӗлӗнмелле чаплӑн ҫӗнелсе улшӑнни пулман. Кӑҫал кӑна Мускавра строительство ӗҫӗсем валли пиллӗк миллиард тенкӗ укҫа уйӑрса пама палӑртнӑ. Мускав ҫыннисем, вӑрҫӑччанхи 1940 ҫулхипе танлаштарсан, кӑҫал икӗ хут ытла, урӑхла каласан, 800 пин тӑваткал метр чухлӗ ытла пурӑнмалли ҫуртсем илеҫҫӗ.

Совет халӑхӗ хӑйӗн культурине юратать, ӑна аталантарса пырать, ӑна чечеклентерессишӗн тӑрӑшать. Культура деятелӗсем хӑйсен пӗтӗм ӑсталӑхне халӑха параҫҫӗ. Трибунӑсем ҫинчен площадь урлӑ иртсе пыракан писательсене, художниксене, композиторсене, пӗтӗм ҫӗршывра паллӑ театрсен коллективӗсене хӗрӳллӗн саламлаҫҫӗ.

Площадьре савӑнӑҫлӑ юрӑ сассисем илтӗнсе тӑраҫҫӗ, музыка ҫемми шӑранать, саламласа кӑшкӑрнӑ сӑмахсем илтӗнеҫҫӗ. Площадь тӑрӑх столицӑри комсомолецсемпе ҫамрӑксем—студентсем, техникумсенче, ремесла училищисенче, ФЗО шкулӗсенче вӗренекенсем иртсе пыраҫҫӗ.

— Сывӑ пултӑр мӗнпур ҫӗршывсенчи ӗҫҫыннисен пӗр кӑмӑллӑхӗ!—тесе ҫырнӑ хӗрлӗ ялавсем ҫӗршерӗн вӗлкӗшеҫҫӗ.

Демонстрантсем трибунӑсем ҫинче тӑракан хӑнасене — ют ҫӗршывсенчи ӗҫҫыннисен представителӗсене хӗрӳллӗн саламлаҫҫӗ. Хӑнасем хушшинче Профсоюзсен пӗтӗм тӗнчери виҫҫӗмӗш конгресӗн делегачӗсем нумай. Ҫак конгресс пролетариатӑн пӗтӗм тӗнчери пӗрлӗхӗ тӗреклене пынине, мӗнпур ҫӗршывсенчи халӑхсем пӗр-пӗринпе килӗштерсе ӗҫлесси ӳссе пынине уҫҫӑн кӑтартса пачӗ.

Хӑйсен аслӑ уяв кунӗ совет ҫыннисем наци никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн, хӑйсен тӑван ҫӗршывне мирлӗ тата демократиллӗ ҫулпа аталантарса пырассишӗн, Японирен империалистсен вӑрҫӑ плацдармӗ туса хума пӑхнине хирӗҫ паттӑррӑн кӗрешекен Япони халӑхне саламлаҫҫӗ. Плакатсем ҫине империализмла пусмӑрлӑха хирӗҫ, хӑйсен ирӗклӗхӗпе наци никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн кӗрешекен колониллӗ тата пӑхӑнса тӑракан ҫӗршывсенчи халӑхсене тӑванла саламласа ҫырнӑ лозунгсем курӑнаҫҫӗ.

Демонстрантсем Англири, Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсенчи тата Совет Союзӗнчи халӑхсен вӑрҫа сирсе ярассишӗн, пӗтӗм тӗнчере ҫирӗп мир туса хурассишӗн кӗрешес ӗҫри туслӑхӗ ячӗпе сывлӑх сунаҫҫӗ. Вӗсем Совет Союзӗнчи халӑхсемпе Франци тата Итали халӑхӗсен туслӑхӗ ячӗпе сывлӑх сунаҫҫӗ.

Октябрь уявӗнчи демонстрацие хутшӑннӑ ӗҫҫыннисем пӗтӗм тӗнчери рабочисен юхӑмӗн паллӑ деятелӗсен портречӗсене ҫӗклесе пыраҫҫӗ.

Спасски башня ҫинчи сехет йӗппи 13 сехет те 45 минут ҫитнине кӑтартать. Столицӑри ӗҫҫыннисен демонстрацийӗ вӗҫленет. Хӗрлӗ площадьре ҫӗнӗрен пиншер физкультурниксем пырса тухаҫҫӗ. Спортсменсен колоннисенчен пысӑк саспаллисемпе совет халӑхӗн таса девизӗ: «Малалла, коммунизм ҫӗнтерӗвӗ патне!», тесе ҫырнӑ сӑмахсем пулса тӑраҫҫӗ.

Октябрьти демонстраци Коммунистсен партийӗ, Совет правительстви тата халӑх хушшинчи ҫирӗп пӗрлӗхе, уҫҫӑн кӑтартни, тӗнчери ҫарӑ-тӑрӑва ҫӑмӑллатассишӗн, пӗтӗм тӗнчере мир туса хурассишӗн кӗрешекен ытти ҫӗршывсенчи ӗҫҫыннисемпе пӗр шухӑшлӑ пулнине уҫҫӑн кӑтартни пулса тӑчӗ. (ТАСС).

# ССР Союзӗн Пысӑк театрӗнче

Ноябрӗн 6-мӗшӗнче Пысӑк театр залне столицӑри паллӑ ҫыннисем, Мускаври предприятисемпе стройкӑсенчи малта пыракан рабочисем, наука, литература тата искусство деятелӗсем, парти тата общество организацисен представителӗсем, Совет Ҫарӗн воинӗсем, министрсем, СССР тата РСФСР Верховнӑй Совечӗсен депутачӗсем пуханнӑ. Кунта ӗҫҫынни депутачӗсен Мускав Совечӗн савӑнӑҫлӑ ларӑвӗ пулнӑ.

Аслӑ Октябрь 36 ҫул тултарнине уявлама урӑх ҫӗршывсенчен килнӗ делегацисем те савӑнӑҫлӑ ларӑва пынӑ.

Каҫхине 17 сехет. Президиума Г. М. Маленков, В. М. Молотов, Н. С. Хрущев, К. Е. Ворошилов, Н. А. Булганин, Л. М. Каганович, А. И. Микоян, М. З. Сабуров, М. Г. Первухин, Н. М. Шверник, П. К. Пономаренко, М. А. Суслов, П. Н. Поспелов, Н. Н. Шаталин, М. Ф. Шкирятов юлташсем тухаҫҫӗ. Вӗсене нумайччен тӑвӑллӑн алӑ ҫупса кӗтсе илеҫҫӗ.

Председатель пулса ертсе пыраканӗ М. А. Яснов пурте ура ҫине тӑрса аслӑ Сталина хисеп тума сӗнет.

Пурте ура ҫине тӑраҫҫӗ.

Унтан савӑнӑҫлӑ ларӑ пуҫланать. Совет Союзӗн Гимнӗ мӑнаҫлӑн янӑрать.

Октябрьти Социализмла Аслӑ революци 36 ҫул тултарни ҫинчен доклад тума К. Е. Ворошилов юлташа сӑмах параҫҫӗ. Театр залне пуханнисем ӑна ӑшшӑн кӗтсе илеҫҫӗ.

— Аслӑ Октябрӗн кашни ҫӗнӗ уявӗнче,—тесе калать докладчик,—ҫӗнтернӗ социализмӑн пултарулла хӑватлӑ вӑйӗ пӗтӗм тӗнче умне ытларах яр-уҫҫӑн, никам сирсе ярайми хӑватпа тухса тӑрать. Коммунистсен аслӑ партийӗ ертсе пыракан пирӗн совет халӑхӗ историре пуҫласа социализмла общество туса хучӗ, ытти ҫӗршывсенчи халӑхсене эксплуататорсен пусмӑрӗнчен хӑтӑлмалли ҫул, ирӗклӗ те телейлӗ пурнӑҫ патне пымалли ҫул кӑтартса пачӗ. Халӗ ҫак ҫулпа пирӗнпе пӗрле аслӑ Китай халӑхӗ, халӑх демократи ҫӗршывӗсенчи тата Демократиллӗ Германи Республикинчи ӗҫҫыннисем пыраҫҫӗ. Совет Союзӗнче вӗсем мирпе нациллӗ никама пӑхӑнманлӑхӑн тӗрекне, этемлӗхӗн лайӑх малашлӑхӗшӗн кӗрешес ӗҫре аслӑ тӗслӗх курса тӑраҫҫӗ.

Иртнӗ ҫулта партишӗн, Совет Союзӗнчи халӑхсемшӗн, прогрессивлӑ пӗтӗм этемлӗхшӗн пирӗн аслӑ ҫулпуҫӑмӑр, генилле полководец Иосиф Виссарионович Сталин вилни пысӑк ҫухату пулчӗ, — тесе калать Ворошилов юлташ.—В. И. Ленин вилнӗ хыҫҫӑн пурте йышӑннӑ тата халӑхпа парти вӗсӗмсӗр шанса тӑнӑ И. В. Сталин хӑйӗн шанчӑклӑ соратникӗсемпе туслӑн пулса партипе ҫӗршыва 30 ҫул хушши ленинла ҫулпа пӗр пӑркаланмасӑр ертсе пычӗ. Ҫак ҫулсем хушшинче пирӗн ҫӗршыв историре пулман йывӑрлӑхсене ҫапӑҫусенче ҫӗнтерсе, социализмла хӑватлӑ держава пулса тӑчӗ. Пирӗн халӑхӑн, чӑннипех истори тӑвакан, ҫӗнӗ, коммунизмла общество тӑвакан халӑхӑн творчествӑлла вӑйӗсем нихҫан пулман пысӑк хӑватпа палӑрчӗҫ.

Докладчик пирӗн ҫӗршывра пулса иртнӗ социализмла аслӑ улшӑнусен картинине кӑтартса парать. Коммунистсен партийӗн XIX-мӗш съездӗн решенийӗсемпе хӗҫпӑшалланнӑ совет халӑхӗ пиллӗк ҫуллӑх план заданийӗсене ӑнӑҫлӑн пурнӑҫласа пырать. Кун ҫинчен цифрӑсем лайӑх каласа параҫҫӗ: кӑҫалхи вунӑ уйӑх хушшинче промышленность пӗтӗмпе продукци туса кӑларни иртнӗ ҫулта ҫав тапхӑр хушшинче туса кӑларнинчен 10,5 процент ӳсрӗ, 1940 ҫулхи шайран 2,5 хут ялӑн ытларах пулчӗ. Совет халӑхӗн пурнӑҫӗ пӗрмаях лайӑхланса пырать. Социализмӑн экономикӑлла тӗп законне асра тытса, совет халӑхӗн ыйтӑвӗшӗн тӑрӑшасси тӗп задача пулса тӑрать тесе шутласа, партипе правительство халӑха кулленхи кирлӗ таварсем туса кӑларассине хӑвӑрт ӳстермелли, ялхуҫалӑхне хӑватлӑн аталантармалли, совет суту-илӗвне лайӑхлатмалли, тавар ҫаврӑнӑшне, пурӑнмалли ҫуртсем тӑвас ӗҫе ӳстерсе пымалли решенисем йышӑнчӗҫ.

1953 ҫулта халӑха кулленхи кирлӗ япаласем туса кӑларасси, вӑрҫӑ умӗнхи 1940 ҫултипе танлаштарсан, 72 процент ӳсет. Суту-илӳ организацийӗсем кӑҫалхи ӗнтӗ ҫулталӑкри плана пӑхнинчен 37 миллиард тенкӗлӗх нумайрах таварсем илеҫҫӗ. Кӑҫалхи вунӑ уйӑх хушшинче, иртнӗ ҫулхи ҫав вӑхӑтрипе танлаштарсан, халӑха таварсем 20 процент ытларах сутнӑ.

Ворошилов юлташ ялхуҫалӑхне малалла аталантарасси, ӑна аталантарма государство пысӑк пулӑшу пани ҫинчен калать. Ялхуҫалӑхне аталантарма 1953 ҫултах ӗнтӗ государство бюджетӗнчен, государствӑн ытти укҫи-тенкинчен, колхозсен хӑйсен укҫи-тенкинчен 70 миллиард тенке яхӑн каять. Кӑҫал ялхуҫалӑхӗ 150 пин трактор (15 вӑйлӑ трактор ҫине куҫарса шутласан), 42 пин комбайн тата ытти ялхуҫалӑх машинисем икӗ миллион ытла илет. Ялта ӗҫлеме ялхуҫалӑх специалисчӗсем, инженерсем тата техниксем нумай кайнӑ.

Пысӑк задачӑна — ҫӗршывра халӑха кулленхи кирлӗ япаласем питӗ нумай пулмалла тӑвас ӗҫе ӑнӑҫлӑн пурнӑҫласси хамӑрӑн промышленность ӗҫне малалла лайӑхлатса пынинчен тӳрремӗнех килсе тӑрать.

Совет халӑхӗ мирлӗ ӗҫе пикенсе туса пырать. Савӑнӑҫлӑ ларӑ трибуни ҫинчен докладчик тата тепӗр хут ҫакна палӑртса каларӗ: Совет правительстви мире сыхласа хӑвармалли тата тӗреклетсе пымалли мӗнпур ҫӗршывсемпе ырӑ кӳршӗсем пулса пурӑнмалли, экономикӑлла ҫыхӑнусене аталантарса тата вӑйлатса пымалли политика тытса пынӑ, малашне те ҫавӑн пек политика тытса пырӗ. Пирӗн тулашри политикӑри ҫак тӗп ҫул улшӑнмасть.

Империалистсен лагерӗн политики ҫинчен каласа, оратор ҫакна палӑртать: империализмла державӑсенчи власра тӑракан ушкӑнсен ӗҫӗсем вӗсем мир тӑшманӗсем пулса тӑнине, халӑхсене хирӗҫтерсе ямалли, ҫӗнӗ вӑрҫӑ хатӗрлемелли политика тытса пынине кӑтартса параҫҫӗ. Анчах тӗнчере миршӗн кӗрешекен вӑйсем пӗрмаях ӳссе, хушӑнса пыраҫҫӗ, вӗсем пӗтӗм тӗнчери мире ҫирӗплетсе пыма пултараҫҫӗ.

Пирӗн ҫӗршывра 36 ҫул каялла, Октябрьте ҫӗнтерӳ тунӑ май пуҫланса кайнӑ совет стройӗн влиянийӗ тӗнче историйӗнче ҫултан-ҫул ытларах палӑрать. Октябрьти революци кӑларса тӑратнӑ принциписем халӗ ӗнтӗ калама ҫук пысӑк вӑй пулса тӑчӗҫ, вӗсем социализмпа демократин хӑватлӑ лагерьне пӗтӗҫтерсе тӑраҫҫӗ, ҫӗнӗрен миллионшар та миллионшар ӗҫҫыннисене ирӗклӗхпе прогрессӑн пысӑк паттӑрлӑхпа кӗрешме ҫӗклентереҫҫӗ.

— Пирӗн мухтавлӑ Коммунистсен партийӗ ертсе пыракан, Марксӑн—Энгельсӑн—Ленинӑн—Сталинӑн пурне те ҫӗнтерекен вӗрентӗвӗпе хавхаланнӑ совет халӑхӗ коммунизм строительствинчи ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсем патне пӗрмаях малалла кайса пырать,—тесе калать юлашкинчен докладчик.

Ленин—Сталин ялавӗ айӗнче, Коммунистсен партийӗ ертсе пынипе — малалла, коммунизм ҫӗнтерӗвӗ патне!

Савӑнӑҫлӑ ларӑва пуханнисем ҫак сӑмахсене нумайччен тӑвӑллӑн алӑ ҫупса кӗтсе илеҫҫӗ. Залра Совет Союзӗнчи Коммунистсен партине, унӑн Центральнӑй Комитетне тата Совет правительствине саламласа каланӑ сассем илтӗнеҫҫӗ.

(ТАСС).

# Октябрьти Социализмла Аслӑ революци 36 ҫул тултарнине республикӑра уявлани

## Шупашкар

Аслӑ Октябрь кунӗсене республика столицинчи ӗҫҫыннисем пысӑк ҫӗкленӳпе тата савӑнӑҫлӑн уявласа ирттерчӗҫ.

Уяв умӗн пиншер ӗҫҫыннисем планран ирттерсе продукци туса кӑларассишӗн кӗрешрӗҫ. Хулари уйрӑм предприятисем вунпӗр уйӑхри тата ҫулталӑкри заданисене ирттерсе пурнӑҫларӗҫ. Ноябрӗн 7-мӗшӗнче вӗсем хӑйсен ӗҫри ӳсӗмӗсене демонстрацире кӑтартса пачӗҫ.

...Хӗрлӗ площадь. Трибуна ҫинче чи ҫӳлте Владимир Ильич Ленинпа Иосиф Виссарионович Сталин портречӗсем. Вӗсен икӗ енӗпе Коммунистсен партийӗпе Совет правительстви руководителӗсен портречӗсем. Пур ҫӗрте те хӗрлӗ ялавсем, Аслӑ Октябрь уявӗ умӗн КПСС Центральнӑй Комитечӗ чӗнсе каланӑ сӑмахсене ҫырнӑ транспарантсем.

Колоннӑсем Хӗрлӗ площаде, демонстрацие васкаҫҫӗ. Унта та кунта хаваслӑ юрӑ, музыка илтӗнет.

Вуннӑр сехет. Трибуна ҫинче — СССР, РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсен депутачӗсем. Хӑнасен трибунинче—столицӑри паллӑ ҫынсем.

Демонстрацие, яланхи пекех, электроаппаратура завочӗн коллективӗ пуҫлать. Вӑл вуншӗр уйӑхри задание срокчен пурнӑҫларӗ. Кунта 188 ҫын кӑҫал пиллӗкшер ҫул нормисене пурнӑҫланӑ. Колоннӑра заводри паллӑ рабочисемпе работницӑсене—Ефимов, Афанасьев, Романов, Монахова, Александрова, Сергеева юлташсемпе ыттисене куратпӑр.

Колонна пуҫӗнче заводри паллӑ стахановецсем А. Витюгов, А. Старостин тата В. Сучков юлташсем коллектив ӗҫпе ҫӗнсе илнӗ хисеплӗ Хӗрлӗ ялавсене ҫӳлте тытса пыраҫҫӗ.

Колонна варринче пыракан автомашинӑн икӗ енӗпе завод продукци туса кӑларассине ҫултан-ҫул ӳстерсе пынине кӑтартакан диаграмма. Кунта аслӑ Ленин темиҫе ҫул каялла: «Коммунизм вӑл совет влаҫӗ тата пӗтӗм ҫӗршыва электрификацилени» тесе каланӑ генилле сӑмахсем. Ҫак сӑмахсем ӑнӑҫлӑн пурнӑҫланса пынине электроаппаратура завочӗн ӗҫӗ те уҫҫӑн кӑтартса парать. Автомашина ҫинче А. Илларионовӑпа А. Комаровскин стахановецсен завод коллективӗ Пӗтӗм Союзри ӑмӑртура мала тухнӑшӑн илнӗ СССР Министрӗсен Совечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне тытса пыраҫҫӗ.

— Сывӑ пултӑр Октябрьти Социализмла Аслӑ революци 36 ҫул тултарни!— илтӗнет трибуна ҫинчен. «Ура!» кӑшкӑрни пӗтӗм таврана хӑватлӑн кӗрлесе каять.

Площаде нумай хӗрлӗ ялавсем йӑтнӑ тепӗр колонна пырса кӗрет. Умра «Аврора» крейсера ӳкернӗ пысӑк панорама. Ун ҫине «1917» тата «1953» цифрӑсем ҫырса хунӑ. Вӑтӑр улттӑ ҫул каялла «Аврора» крейсер ҫинчи тупӑсен залпӗ тӗнчере пӗрремӗш Совет государстви туса хуни ҫинчен пӗлтернӗ. Унтанпа 36 ҫул иртрӗ. Совет ҫыннисем, Коммунистсен партийӗ аслӑ ертсе пынипе коммунизм патне шанчӑклӑн пыраҫҫӗ. Пирӗнпе пӗрле халӗ аслӑ Китай халӑхӗ тата Европӑри халӑх демократи ҫӗршывӗсенчи ӗҫҫыннисем ҫӗнӗ пурнӑҫ тӑваҫҫӗ.

— Халӑхсен аслӑ туслӑхӗшӗн, тӗнчери ҫирӗп миршӗн! — янӑрать трибуна ҫинчен. Хӗрлӗ площадьре виҫӗ хут «Ура» вӗҫтерӗҫҫӗ.

Площаде пир-авӑр комбиначӗн строителӗсен колонни пырса кӗрет. Автомашина ҫинче чул ҫурт макечӗ. Кус умӗнчех ӳссе пырать вӑл. Строительствӑра хӑватлӑ техникӑпа ӗҫлеҫҫӗ. Аслӑ уява хатӗрленсе, строительсем пысӑк ҫитӗнӳ тунӑ: 540 каменщик, плотник, бетонщик, арматурщик, монтажник ҫулталӑкри задание пурнӑҫланӑ. Халӗ вӗсем пир тӗртекен корпуса туса пӗтереҫҫӗ. Кунта 400 станока вырнаҫтарса ӗҫе яма та ӗнтӗ. Пир-авӑр комбиначӗ уяв умӗн малтанхи вуншар пин метр сатин тӗртсе кӑларнӑ.

Шкул ачисен колоннисем иртеҫҫӗ. Телейлӗ ачасем партипе правительство руководителӗсен портречӗсене ҫӗкленӗ, вӗсене чечексемпе илемлетнӗ.

— Сывӑ пултӑр Ленин ячӗпе тӑракан пионер организацийӗ!

— Сывӑ пулччӑр совет ачисем!

Хаваслӑн «Ура» кӑшкӑрни уҫҫӑн янӑрать. Ҫав вӑхӑтра пӗлӗтелле шурӑ кӑвакарчӑнсем, хӗрлӗ те симӗс шарсем вӗҫсе хӑпараҫҫӗ.

Трибуна умӗн педагогика, ялхуҫалӑх институчӗсен, техникумсенче вӗренекенсен колоннисем иртеҫҫӗ. Ялхуҫалӑхӗн пулас специалисчӗсем партин Центральнӑй Комитечӗн сентябрьти Пленумӗ йышӑннӑ решенире кӑтартнӑ чаплӑ цифрӑсемпе сӑмахсене ҫырнӑ транспарантсем, тулӑпа ыраш кӗлтисем ҫӗклесе пыраҫҫӗ. Кунтах ҫӗр чӑмӑрӗн пысӑк макечӗ курӑнать. Ун ҫинче Совет Союзӗн, халӑх демократи ҫӗршывӗсен карттисене кӑтартнӑ.

Колоннӑсем пӗрин хыҫҫӑн тепри иртеҫҫӗ. Суту-илӳ работникӗсем хыҫҫӑн культура работникӗсен колонни пырать. Вӗсем хыҫҫӑн — чӗлхаҫӑсен, апат-ҫимӗҫ предприятийӗсенче ӗҫлекенсен, железнодорожниксен, медицина работникӗсен колоннисем.

— Сывӑ пултӑр Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗ—коммунизм тӑвассишӗн кӗрешес ӗҫре совет халӑхне ҫул кӑтартса, ертсе пыракан аслӑ вӑй! Халӑх «Ура» кӑшкӑрать. Ҫак хӑватлӑ сасӑ Мускав сассипе пӗрлешет, пӗтӗм ҫӗршыва патӗнчен туйӑнать.

Халӑх савӑнать. Совет ҫыннисем Октябрь уявӗ 36 ҫул тултарнине чыслӑн та чаплӑн паллӑ тӑваҫҫӗ.

Шупашкарти демонстраци совет халӑхӗ хӑйӗн Тӑван ҫӗршывне, Коммунистсен партийӗпе Совет Правительствине вӗҫӗ-хӗррисӗр юратнине, коммунизм строительствин аслӑ задачисене чыслӑ пурнӑҫлассишӗн пӗтӗм вӑя хурса ӗҫлеме пулнине уҫҫӑн кӑтартса пачӗ.

## Куславкка

Аслӑ уяв 36 ҫул тултарнине районти ӗҫҫыннисем савӑнса паллӑ турӗҫ.

Пурӑнмалли ҫуртсем тӑвакан завод коллективӗ чаплӑ кун тӗлне 11 уйӑхри производство программине пурнӑҫларӗ, планран ирттерсе продукци нумай туса кӑларчӗ.

Аслӑ уяв умӗнхи социализмла ӑмӑртура ҫуртсем тӑвакан цехри рабочисемпе работницӑсем пысӑк ҫитӗнӳсем тунӑ. Вӗсем октябрь уйӑхӗнчи плана ҫичӗ кун малтан тултарнӑ. Максимова, Шибаева, Малинина станочницӑсем, Михайлов, Корнилов, Иванов сборщиксем уйӑхри заданисене пӗр хут ҫурӑ ирттерсе тултарнӑ.

Уяв умӗнхи кунсенче предприятисемпе колхозсенче тата учрежденисенче савӑнӑҫлӑ пухусем пулса иртрӗҫ. Районти культура ҫуртӗнче пулнӑ пухура Октябрьти Социализмла Аслӑ революци 36 ҫул тултарни ҫинчен райисполком председателӗ Смыков юлташ, ҫуртсем тӑвакан заводри рабочисен, инженерсен тата служащисен пухӑвӗнче завод директорӗ Коваленко юлташ докладсем туса пачӗҫ.

Ноябрӗн 7-мӗшӗнче ӗҫҫыннисен пысӑк митингӗ пулчӗ.

Район центрӗнчи кинотеатрсенче 1917 ҫулхи Аслӑ Октябрь кунӗсем ҫинчен ӳкернӗ историллӗ кинокартинӑсем кӑтартрӗҫ.

## Ҫӗрпӳ

Предприятисен коллективӗсем Аслӑ Октябрь ячӗпе ӗҫ вахтине тӑрса тунӑ ҫитӗнӳсен итогӗсене палӑртрӗҫ. Промкомбинатри рабочисем ҫитес ҫул шучӗпе продукци туса кӑлараҫҫӗ. Пир-авӑр фабрикин коллективӗ, иртнӗ уйӑхсенче ҫитменлӗхсӗр ӗҫленӗскер, октябрьте производство планне ӑнӑҫлӑн тултарчӗ.

Селекци станцийӗнче кӑҫал кашни гектартан 24 центнер ыраш, 22 центнер кӗрхи тулӑ, 25 центнер урпа пухса кӗртнӗ, сӑвакан кашни ӗнерен тӑватӑ пин литр ытла сӗт суса илнӗ.

Хыркасенче 9 ял энерги парса тӑракан гидроэлектростанци ӗҫлеме пуҫларӗ. Патӑрьелӗнче ҫӗнӗ магазин уҫӑлчӗ. Жданов ячӗпе тӑракан колхоз радиоузел туса ӗҫе ячӗ.

Ноябрӗн 6-мӗшӗнче каҫхине хуларa савӑнӑҫлӑ пуху пулчӗ.

Тепӗр кунне хулари ӗҫҫыннисен демонстрацийӗ пулса иртрӗ. Демонстрацие 10 пин ҫын хутшӑнчӗ.

ОКТЯБРЬТИ СОЦИАЛИЗМЛА АСЛӐ РЕВОЛЮЦИ 36 ҪУЛ ТУЛТАРНИНЕ ШУПАШКАРТА УЯВЛАНИ.

ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: Шупашкар хулин ӗҫҫыннисен ноябрӗн 7-мӗшӗнче Хӗрлӗ площадьре пулнӑ демонстрацийӗ (сулахайран сылтӑмалла): 1. Электроаппаратура заводӗнче ӗҫлекенсен колонни; 2. Пир-авӑр комбиначӗ [illegible] ӗҫлекенсен колонни; 3. Ялхуҫалӑх институчӗн колонни.

Е. ВИНЬКОВ фотоӳкерчӗкӗсем.

# Совет Правительстви Англи, Франци тата США Правительствисене Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен канашлăвне пухасси çинчен панă нота

Октябрĕн 18-мĕшĕнче ССР Союзĕн Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министерстви Англи, Франци тата США Правительствисенчен пĕр пек нотăсем илнĕ. Вĕсене сентябрĕн 28-мĕшĕнче Совет Правительстви Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен канашлăвне пухасси çинчен панă нотăна ответлесе çырнă.

Ноябрĕн 3-мĕшĕнче ССР Союзĕн Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министерстви Англин, Францин тата США-н Мускаври Посольствисене Совет Правительстви ответлă нотине ярса панă.

Аялтарах Англи Правительстви 1953 çулхи октябрĕн 18-мĕшĕнче панă нотăна тата Совет Правительстви 1953 çулхи ноябрĕн 3-мĕшĕнче панă нотăна пичетленĕ.

## Англи Правительстви 1953 çулхи октябрĕн 18-мĕшĕнче панă нота

Британи Королевин Посолĕ хăй Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрне хисепленине палăртать тата, Великобританин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ кăтарту панипе, çакăн çинчен пĕлтерет:

Великобритани Правительстви, яланхи пекех Пĕрлешӳллĕ Штатсен тата Франци Правительствисемпе тачă çыхăнса, Совет Правительстви сентябрĕн 28-мĕшĕнче панă нотăна тĕплĕн тĕпчесе вĕренчĕ. Вăл нотăна Лугано хулинче октябрĕн 15-мĕшĕнче тăватă держава канашлăвне пухасси çинчен хĕвеланăçĕнчи виçĕ держава тăратнă сĕнӳ пирки панă. Германи Федеральлă Республикин правительствипе тата Германин Берлинри влаçĕсемпе те консультацисем иртнĕ.

2. Германипе Австри пирки тăракан проблемăсене кăмăла каймалла йĕркелени, паллах, тĕнчери йывăр хару-тăрăва чăн-чăнах тата вăрăм вăхăта çăмăллатмалли кирек мĕнле ĕçшĕн те кирлĕ тата çав çĕршывсенчи халăхсен пуласлăхĕшĕн те питĕ кирлĕ. Великобритани Правительстви, хăй июлĕн 15-мĕшĕнче тата сентябрĕн 2-мĕшĕнче панă нотăсене шута илсе, çак шухăша çирĕп тытать: тĕнчери тĕп ыйтусене, çав шутра Европа хăрушсăрлăхĕ çинчен тăракан ыйтăва та, татса парас тĕлĕшпе чăннипех прогресс тăвассине малашне нотăсем парса илнипе мар, Германипе Австри çинчен тăракан ыйтăва Пĕрлешӳллĕ Штатсен, Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн, Пĕрлешӳллĕ Королевствăн тата Францин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен канашлăвĕнче уççăн сӳтсе явнипе пурнăçлама пулать. Великобритани Правительстви çапла шанса тăрать: Совет ноти çав ыйтусене пĕр тăхтаса тăмасăр сӳтсе явма хатĕрриине палăртать.

3. Çавăн пек канашлу Совет Правительствине Германипе Австри ыйтăвĕсем тăрăх хăй калас тенĕ кирек мĕнле шухăша та каласа пама май парать. Великобритани Правительстви хăй енчен малтанхи нотăсенче хускатнă ыйтусем тăрăх хăйĕн шухăшне каласа пама çав майсемпе кăмăлласах усă курĕ.

4. Совет Правительстви Австри ыйтăвне яланхи дипломатилле йĕркепе сӳтсе явма сĕннине илес пулсан, Великобритани Правительстви çапла шутлать: дипломатилле йĕркепе сӳтсе явма çул яланах уçă, çавăн пек йĕркепе пăхса тухма тăратма пултаракан договор пирки Совет Союзĕн кирек мĕнле сĕнĕвне те Великобритани Правительстви малтанхи пекех малалла та тĕплĕн пăхса тухĕ. Анчах та çавăн пек майсемпе усă курни юлашки темиçе çул хушшинче нимĕнле прогресс патне те илсе пымарĕ, çавăнпа та Великобритани Правительстви çапла шухăшлать: çак ыйтăва Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсем тăваттăшĕ хăйсем сӳтсе явни халиччен пулнă йывăрлăхран тухмалли тата договор тĕлĕшпе килĕшӳ тумалли практикăлла лайăхрах çул пулса тăрать.

5. Германипе Австри ыйтăвĕсене татса парасси ытла та вăрăма кайрĕ. Пĕрлешӳллĕ Штатсен, Пĕрлешӳллĕ Королевствăн тата Францин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен, хăйсен Правительствисем Совет Правительствипе пĕрле Германипе Австри тĕлĕшпе уйрăмах ответлă пулнине туйса, çак ыйтусене Совет Союзĕн Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕпе пĕрле мĕнле те пулин хăвăртрах сӳтсе явасшăн. Малтан сĕннĕ вăхăт—октябрĕн 15-мĕшĕ иртсе кайрĕ ĕнтĕ. Çавăнпа та Великобритани Правительстви: Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен канашлăва ноябрĕн 9-мĕшĕнче Лугано хулинче пухăнмалла, тесе сĕнет. Вăл Совет Правительстви çав канашлăва хутшăнма килĕшессе чĕререн шанать.

6. Совет Правительствин нотинче çавăн пекех тата тĕнчери хару-тăрăва çăмăллатас тĕлĕшпе пурнăçламалли мероприятисене пăхса тухма пилĕк держава конференцине пухасси çинчен калакан сĕнӳ пур. Великобритани Правительстви çав йывăрлăхăн сăлтавĕсем çинчен, вĕсене пĕтерес тĕллевпе, яланах сӳтсе явма хатĕр. Анчах та вăл çакна лайăх результат тума тĕрĕс шухăшланă пек малашлăх туса хуракан условисенче, тӳрех интересленекен Правительствăсен шухăшне тивĕçлипе палăртма май паракан условисенче тăвасшăн. Çакна май Великобритани Правительстви Корейăри перемири çинчен пыракан калаçусенче коммунистла енĕ сĕннĕ тата перемири çинчен тунă килĕшӳре, çавăн пекех Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн Генеральнăй Ассамблейин сĕннĕ формăпа Корея тĕлĕшпе Политикăлла Конференци пухма килĕшрĕ. Конференцие хатĕрленесси пирки тăракан ыйту çинчен сӳтсе явасси Паньмыньчжонре пулмалла, тесе сĕннĕччĕ. Совет Правительствин нотинче асăннă правительствăсем пиллĕкĕшĕ те хăйсен представителĕсене çав конференцие яма пултарĕччĕç. Ку конференци çывăх вăхăтрах усăлать, тесе шанса тăрасçĕ. Конференци тĕллевĕ çавăн пек: Инçет Хĕвелтухăçĕнчи хару-тăрури йывăрлăхăн тĕп çăлкуçĕсенчен пĕрне пĕтермелле, çапла вара тĕнчен çав пайĕнче хальхи вăхăтри ытти пысăк проблемăсене çывăх вăхăтрах мирлĕ майпа йĕркелеме çул уçса памалла. Совет Правительствин нотинче асăннă ытти ыйтусене, сăмахран, хĕçпăшалланасси çинчен тăракан ыйтăва, е Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн Генеральнăй Ассамблейинче сӳтсе явасçĕ е сӳтсе явĕç. Чăннипех ĕнтĕ, Совет Правительствин нотинче асăннă темиçе ыйтăва Совет Союзĕ ыйтнипе Генеральнăй Ассамблейăн халĕ пыракан сессийĕн кун йĕркине кĕртнĕ. Бунсăр пуçне, Великобритани Правительстви кирек хăш правительство тăратма кăмăл тăвакан кирек мĕнле ыйтусене те яланхи пек дипломатилле йĕркепе сӳтсе явма малтанхи пекех хатĕр.

7. Çапла ĕнтĕ, тĕрлĕ çак ыйтусем тĕлĕшпе прогресс тума çул уçă. Бунсăр пуçне тата, хальхи вăхăтра Лугано хулинче сӳтсе явасси ăнăçлă иртме пултарсан, ытти тĕп ыйтусене сӳтсе явма тата государствăсен хушшинче мирлĕ, туслă çыхăнусем тытма кирлĕ условисене тепĕр хут туса хума майсем пуласçĕ.

## Совет Правительстви 1953 çулхи ноябрĕн 3-мĕшĕнче панă нота

Совет Правительстви октябрĕн 18-мĕшĕнче Англи Правительстви ярса панă нотăна илни çинчен пĕлтерет. Çак нота вăл Совет Правительстви сентябрĕн 28-мĕшĕнче панă нота пирки ответ пани пулать.

Англи Правительстви октябрĕн 18-мĕшĕнче панă нотăра, уйччен сентябрĕн 2-мĕшĕнче панă нотăри пекех, Совет Правительстви кăларса тăратнă тĕп ыйтусенчен пăрăнса кайнă. Совет Правительстви тăратнă тĕп ыйтусене пăхса тухни тĕнчери татса паман ыйтусене татса пама тата мире тĕревлетме пулăшать. Ыйтусене çакăн пек йĕркелесси хальхи вăхăтра тата ытларах кирлĕ пулса тăчĕ.

Çавăн пекех çак фактсем асăрхамасăр та иртсе кайма çук: Англи Правительствин юлашки ноти вăл хальхинче те виçĕ державă—Англи, Франци тата США пĕр-пĕринпе калаçласа татăлнă ĕç пулса тăрать. Çавăнпа та ĕнтĕ виçĕ державăн Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен Лондонра пулса иртнĕ канашлăвĕ, уйччен Вашингтонра пулса иртнĕ канашлу пекех, тĕнчери татса паман ыйтусене татса парас задачăна ниепле те çăмăллатма пултараймасть. Пачах тепĕр майлă. Çакнашкал канашлусем вĕсем интересленекен державăсем хушшинче калаçса татăлас тĕлĕшпе усăрлăх тăвассине тата çакнашкал тума май парассине пулса тăмасăр иртме пултараймасçĕ. Çакă вăл, паллах, çĕршывсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлес интересĕсене хирĕç пырать.

Совет Правительстви хăйĕн сентябрĕн 28-мĕшĕнче панă нотинче Англи Правительствине, çавăн пекех США-па Франци Правительствисене те, Англи, Франци, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен, Китай Халăх Республикин, Совет Союзĕн Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен тĕнчери çыхăнусенчи йывăр хару-тăрăва çăмăллатас тĕлĕшпе кирлĕ ĕçсене пăхса тухма кирли çинчен асăрхаттарчĕ. Совет Правительстви çакăн çинчен асăрхаттарнă чухне асăннă державăсен правительствисем те çакăн пек калаçса татăлма тăрăшасçĕ пулĕ тесе шутланă. Çакăн пек калаçса татăлни çывăх вăхăтрах тĕнчери йывăр хару-тăрăва çăмăллатма пулăшнă пулĕччĕ. Çакă вăл тĕнчери халĕ татса паманни ыйтусене татса пама май панă пулĕччĕ. Çак сĕнӳе тăратса, Совет Правительстви çакна шута илнĕ, хальхи вăхăтра, уйрăмах Корейăра перемири тунă май, çакăн пек тума хăвăх хару-тăру пулса тăчĕ.

Корейăра перемири тăвас тĕлĕшпе Китай Халăх Республикин правительстви тăрăшни пысăк вырăн йышăнса тăни паллă. Вăл Демократилле Корея Халăх Республикин правительствипе пĕрле пусăрăнлăх кăтартрĕ. Çакна пула Корейăра юн юхтарассине чарса лартнă. Интересленекен мĕн енĕ те тĕнчери хару-тăрăва çăмăллатас тĕлĕшпе малалла утăмсем тăвасса шанса тăни вырăнлă пулнă. Тĕнчери хутшăнусенчи йывăр хару-тăрăва çăмăллатасси çинчен тăракан ыйтăва сӳтсе явма килĕшменнине—татса паман ыйтусене татса пама килĕшменни вырăнне хумасăр тăма çук.

Тĕнчери хару-тăру йывăрланса ситнине кăтартакан ĕçсенчен пĕри вăл юлашки çулсенче вăйлăн хĕçпăшалланасси ытларах ӳссе пыни пулать. Çак хĕçпăшалсем шутне атомлă тата водородлă хĕçпăшалсем те кĕреççĕ. Государствăсенчен пĕрисем тепĕр государствăсене хирĕç çар ушкăнĕсем тăваççĕ. Хăшпĕр государствăсем ытти çĕршывсен территорийĕсем çинче çар базисем тăваççĕ тата ытти те. Англи Правительстви, СССР Правительстви пекех, çакăн пек ĕçсем тĕнчери çĕнĕ вăрçă хăрушлăхне ӳстернине йышăнать пулсан тата тĕнчери асăннă пысăк ыйтусене пăхса тухассине паллă мар вăхăта хăварма юраманнине йышăнать пулсан, тĕнчери йывăр хару-тăрăва çăмăллатас тĕлĕшпе туса иртермелли ĕçсем çинчен тăракан ыйтăва малалла тăсса пымасăр пăхса тухассине хирĕç тăрасси те пулман пулĕччĕ. Çавна йышăнмасан вара тĕнчери халĕ татса паманни ыйтусене татса пама кирлĕ условисем туса хума май пулман пулĕччĕ. Çак ыйтусене татса парассине Англи Правительстви те пысăк вырăна хурать ĕнтĕ.

Англи Правительстви хăй октябрĕн 18-мĕшĕнче панă нотăра: Совет Правительстви сентябрĕн 28-мĕшĕнче панă нотăра кăларса тăратнă хăшпĕр ыйтусене, вăл шутра хĕçпăшалсăрланасси çинчен тăракан ыйтăва та, Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн Генеральнăй Ассамблейинче сӳтсе явасçĕ е сӳтсе явĕç, тесе каланă. Анчах та çакăн пек калании мĕн чухлĕ те пулин вырăнлă тесе шутлама çук. Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕнче тĕнчери мире сыхласа тăрас тĕлĕшпе çыхăннă хăшпĕр ыйтусене çак Организаци туса хунăранпах сӳтсе явасçĕ ĕнтĕ. Ку ыйтусем шутне пуринчен малтан хĕçпăшалсене чакарасси тата йĕркелесе тăрасси çинчен, атомлă хĕçпăшалсене тата халăха йышлăн вĕлерсе пĕтермелли ытти хĕçпăшалсене чарса хурасси çинчен, ют çĕршывсен территорийĕсенче çар базисем туса хума юраманни çинчен, тĕнчери çĕнĕ вăрçа хатĕрленес тĕлĕшпе пропагандăна сарма юраманни çинчен калакан ыйтусем кĕреççĕ. Анчах та, паллă ĕнтĕ, çак пысăк ыйтусене ООН-ра татса парассине хирĕç ытти тăрасçĕ. Çавна пула, хăшпĕр çĕршывсен урăх хĕçпăшалланасси чакмасть кăна мар тата вăйлăнрах пулса пырать. Çавна пула налогсем вĕçемсĕр ӳссе пыраççĕ. Çак налогсен йывăрлăхĕ çак çĕршывсенчи халăхăн анлă сийĕсен çурăмĕ çине тиенет. Халăха йышлăн вĕлерсе пĕтермелли хĕçпăшалсем туса кăларасси ӳсет. Водородлă бомба тума пуçланипе хĕçпăшалсен çĕмĕрекен вăйĕ тата ытларах пысăкланать.

Тĕнчери хару-тăрăва çăмăллатас ĕçре Корея ыйтăвне пĕтĕмпех татса пани пысăк вырăн йышăнса тăрать. Хальхи вăхăт çапла тума хушать: перемири тунă никĕс çинче Корея халăхне пĕрлештересси çинчен тата Корейăра çирĕп мир туса хурасси çинчен тăракан ыйтăва татса памалла. Корея ыйтăвĕ тăрăх пухакан Политикăлла Конференцин çак тĕллевĕ çавăн пек пулмалла та ĕнтĕ.

Совет Правительстви хăйĕн сентябрĕн 28-мĕшĕнче панă нотинче çак конференцие пухасси конференцие хутшăнакан çĕршывсен йышĕ çинчен тăракан ыйтăва пăхса тухнă май пысăк йывăрлăхсем умне тухса тăнине палăртнăччĕ ĕнтĕ. Çак ыйтура пĕр-пĕринпе килĕшсе ĕçлемелле пулнине, тӳрех интересленекен государствăсемпе—Китай Халăх Республикипе тата Демократилле Корея Халăх Республикипе килĕшсе ĕçлеме кирлине хаклаймасăр—çакна палăрса тăрать-ха. Пурне те çакă паллă пулмалла ĕнтĕ: Корея ыйтăвĕ тăрăх пухакан Политикăлла Конференци ĕçĕ ăнăçлă пуласси чылай енчен тӳрех интересленекен икĕ енĕ те пĕр-пĕринпе килĕшсе ĕçленинчен тата çак конференци ĕçне ытти, нейтральнăй государствăсем хутшăннинчен килет. Корейăра перемири тума пулăшнă çак государствăсем Корея тĕлĕшпе тăракан пĕтĕм ыйтăва татса пама пысăк пулăшу панă пулĕччĕç.

Калаçса татăлнă тăрăх Паньмыньчжонра икĕ енĕн канашлăвĕ пырать ĕнтĕ. Ăна Корея тĕлĕшпе Политикăлла Конференцине хатĕрлессипе çыхăнса тăракан, татса паман ыйтусене пăхса тухма пухнă. США Правительстви тата Корея ыйтăвне татса парас тĕлĕшпе тухса тăнă йывăрлăхсене сирсе ярасшăн, уйрăммăн илсен, конференцие хутшăнакан çĕршывсен йышĕ çинчен тăракан ыйтусемпе çыхăннă йывăрлăхсене татса парассишĕн ответлă пулса тăракан ытти хăшпĕр çĕршывсен Правительствисем, чăннипех çак конференци ăнăçлă иртмелле пулăр тесе, тăрăшасçĕ пулсан, Корейăпа Китай енĕ кăларса тăратнă сӳлте асăннă законлă требованисене шута илмесĕр тăма пултараймасçĕ. ООН Генеральнăй Ассамблейин 7-мĕш сессийĕнче конференцие хутшăнакан çĕршывсен йышĕ çинчен сӳтсе явни Корейăпа Китай енĕн сĕнĕвĕсемпе Европăри, Азири тата Африкăри чылай государствăсем килĕшнине кăтартрĕ.

Тĕнчери хару-тăрăва çăмăллатасси Китай Халăх Республикипе çыхăну тытас ыйтăва йĕркеленинчен, Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕнче Китая унăн законлă правине панинчен тата мире, халăхсен хăрушсăрлăхне сыхлас тĕлĕшпе тăракан тĕп ыйтусене татса парас ĕçе ăна хутшăнтарнинчен те нумай килет. Китай Халăх Республикин нацилле прависене каллех хисеплемелле тăвас ыйтăва вăрăма ямасăр пăхса тухма кирлине шута илменни тата тĕнчери ыйтусене татса парас ĕçе Китая хутшăнма чарса тăни — тĕнчери хару-тăрăва малашне йывăрлатса пыма пулăшнине пĕлтерет. Корея тĕлĕшпе иртермелли конференцие Китай Халăх Республикине хутшăнма май панипех ĕç пĕтмест, мĕншĕн тесен çав конференци ăнăçлă пулса иртесси те тĕнчери ытти ыйтусене йĕркелес ĕçре Китай халăхĕн законлă прависене, интересĕсене хисепленинчен килет. Çавăн пекех хăшпĕр государствăсем енчен Китай Халăх Республики çине çак çулсенче пĕрмай тапăнса пăхма хăтланнине те тивĕçсĕр япала тесе шутлама кирлĕ.

Малта каланисенчен çакă курăнать: тĕнчери хару-тăрăва çăмăллатас ĕçре пысăк вырăнта тăракан ыйтусене йĕркелес пулсан,—Кăнтăр-Хĕвелтухăç Азипе Лăпкă океан тăрăхĕнчи çĕршывсем пирки тухса тăракан ыйтусем çинчен калаçмастпăр та,—пилĕк державăн — Англин, Францин, США-н, Китай Халăх Республикин тата Совет Союзĕн—Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен канашлăвне пухма кирлех пулса тăрать.

Тĕнчери йывăр хару-тăрăва çăмăллатас шутпа пилĕк державăн Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен канашлăвне иртерме Совет Правительстви сĕннине хирĕç Англи Правительстви хару-тăру йывăрланнин сăлтавĕсене пăхса тухса вĕсене пĕтерессе çинчен сӳтсе явма килĕшни çинчен пĕлтерчĕ. Анчах Англи Правительстви çапла пĕлтерчĕ: «вăл çакна лайăх результат тума тĕрĕс шухăшланă пек малашлăх туса хуракан условисенче, тӳрех интересленекен Правительствăсен шухăшне тивĕçлипе палăртма май паракан условисенче тăвасшăн».

Çапла вара, тĕнчери хальхи хару-тăрури йывăрлăхăн сăлтавĕсене пĕтерме пăхса тухма килĕшни çинчен пĕлтернĕ пулсан та, Англи Правительстви пилĕк держава канашлăвне халех иртерессине хирĕç тăрать. Ку вăл малтанлăха тем тĕрлĕ условисем кăларса тăратнинчен те курăнать. Çав условисене канашлăва пухассине паллă мар вăхăта хăварас тĕллевпе кăларса тăратнă. Англи Правительстви малалла та çавăн пек условисем лартать пулсан, вăл вара тĕнчери йывăр хару-тăрăва çăмăллатма тата тĕнчери татса паман ыйтусене йĕркелеме тăрăшманнине пĕлтерет.

Пилĕк держава канашлăвне пухассине хирĕç пулса, Англи Правительстви Корея пирки Политикăлла Конференци иртерме, унта çав çĕршывсен представителĕсем пулма пултарнипе килĕшни çине кăтартать. Анчах Англи Правительстви çапла калани тӳрре кăларма çук. Вăл Корея пирки иртермелли конференцие нейтральнăй çĕршывсем хутшăнассине хирĕç тăрать. Çавна май Совет Союзĕ çав конференцие хутшăнмасăр юлма пултарать. Çакна та манмалла мар: Корея пирки пухăнакан конференцире тĕнчери йывăр хару-тăрăва çăмăллатас ыйтăва пăхса тухма май пулмасть. Ăна вăраха хăвармасăр халех пăхса тухни кирлĕ.

Совет Правительстви сентябрĕн 28-мĕшĕнче панă нотăра Хĕвеланăç Германире юлашки вăхăтра пулса иртекен политикăлла аталану Европăри мире юратакан çĕршывсем шикленессине вăйлатни çинчен те каланăччĕ.

Хĕвеланăç Германири влаçра тăракан ушкăнсем уççăнах çавăн пек тĕллев лартаççĕ: хĕçпăшалланмалли плана хăвăртрах пурнăçламалла. Регулярнăй çар, сывлăш-çар вăйĕсем, тинĕс-çар флочĕ тăвас тĕлĕшпе ĕç пырать. Çĕршер промышленность предприятийĕсене çар валли ĕçлеме юрăхлă тăваççĕ. Хĕвеланăç Германири монополистсем, хăй вăхăтĕнче гитлерла агрессие хавхалантарса пынă экскерсем, халĕ çар промышленноçне юсас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Гитлерла çара тунă тата Гитлерăн вăрçă планĕсене пурнăçласа пынă генералсем халĕ каллех Хĕвеланăç Германири хĕçпăшаллă вăйсене тăвас ĕçе ертсе пыраççĕ. Бонри хальхи правительство, Хĕвеланăç Германири монополистсен тата гитлерла çара ертсе пынă çынсен шухăш-ĕмĕчĕсене палăртса тăраканскер, кӳршĕллĕ государствăсем тĕлĕшпе хăй агрессилле тĕллев тытнине пытарса тăмасть. Хĕвеланăç Германири влаçра тăракан ушкăнсем хăйсен реваншистла планĕсем çинчен уççăнах пĕлтереççĕ, ку вăл Европăри хăрушсăрлăхшăн ытларах та ытларах хăрушлăх пулса тăрать. Хĕвеланăç Германири реваншистсем юлашки вăхăтра хăйсен пуçĕсене çĕклерĕç. Вĕсем ытти государствăсенчи агрессилле çынсем хăйсене пулăшу парасса кĕтеççĕ.

Çакăн пек хару-тăрура Хĕвеланăç Германири влаçра тăракан ушкăнсем Парижра тата Бонра тунă килĕшӳсене çирĕплетесшĕн тем тĕрлĕ тăрăшнине пула туса тăнă хăрушлăха курмасăр тăма юрамасть. Вĕсем Хĕвеланăç Германие тепĕр хут хĕçпăшаллантарассине хăвăртлатма тата Европăра хăйсен реваншистла планĕсене пурнăçлама шутлани Парижра тата Бонра тунă договорсемпе çыхăннă. Çак условисенче çĕршывсене тытăна хĕснине тӳсме май çуккине палăртмалла. Бонра тата Парижра тунă килĕшӳсене хирĕç общественность тăнине пĕтерес тесе, çĕршывсене хĕсессе юлашки вăхăтра, сăмахран, Франци тĕлĕшпе пулнă.

Европа çарĕ тĕкенсĕрĕ çинчен Парижра тунă килĕшӳ çав çара Хĕвеланăç Германири хĕçпăшаллă вăйсене кĕртме палăртать пулсан, ку килĕшӳ Хĕвеланăç Германире регулярнăй çар тăвассине пĕлтерет. Хĕвеланăç Германири реваншистсем, çак килĕшĕве пурнăçа кĕртес тесе, нимĕн умĕнче те чарăнса тăмаççĕ. Çавăнпа пĕрлех, Бонра тунă килĕшĕве пурнăçа кĕртессине те хăвăртлатас тесе, Германири реваншистла ушкăнсем ытти çĕршывсене хĕсме чарăнмаççĕ. Çак килĕшӳ Хĕвеланăç Германие вуншар çул хушши оккупациленĕ çĕршыв условийĕсенче тăратса хăварать. Реваншистла ушкăнсем Çурçĕр Атлантика блокне кĕрекен державăсен çар ушкăнне кĕрсе тата ку ушкăнри чи агрессилле вăйсен пулăшăвне илсе Бонра тунă килĕшӳпе усă курма шутлаççĕ. Агрессилле вăйсен пулăшăвне илсе, реваншистла ушкăнсем хăйсем мĕн тăвас тенĕ, çавна тăвасшăн.

Парижра тата Бонра тунă килĕшӳсем вăя кĕни Хĕвеланăç Германие тепĕр хут хĕçпăшаллантарас ĕç анлăн сарăлса кайнине пĕлтерĕччĕ. Ун чухне Хĕвеланăç Германири реваншистсем çак килĕшӳсен чылай параграфĕсене пăхăнма пăрахĕччĕç. Çакна Европăри халăхсен хурлăхлă опычĕ çирĕплетсе парать. Ун чухне реваншистсем çак килĕшĕве хутшăнакансене тĕрлĕ авантюрăсем тума хушĕччĕç. Çав авантюрăсем вĕсене хăйсен преступниклă реваншистла тĕллевĕсене пурнăçлассишĕн вăрçă пуçласа яма пулăшĕччĕç.

Европăри мире юратакан халăхсем, чи малтанах, Хĕвеланăç Германи кӳршисем çакăнпа килĕшме пултараймаççĕ. Агрессилле Германи милитаризмне пула кӳршĕ çĕршывсем никĕс курни çинчен калакан истори урокĕсем пурне те паллă. Германи милитарисчĕсем çĕршывсем çине тапăнас шутпа яланах сăлтавсем тупнă.

Çавна май Англи Правительствин октябрĕн 18-мĕшĕнчи нотинче Европа хăрушсăрлăхĕ çинчен тăракан питĕ кирлĕ ыйтăва асăнни паллă ĕнтĕ. Совет Правительстви Европа хăрушсăрлăхĕ çинчен тăракан ыйтăва яланах чи пысăк вырăна хунă. Çакна йышăнмасăр иртме юрамасть: Германи ыйтăвне çакăн пек майпа татса пани кăна Европăри мире юратакан халăхсен, çавăн пекех Германи халăхĕн интересĕсемпе килĕшсе тăрĕ. Вăл ыйтăва татса парсан, Германин наци пĕрлĕхне çĕнĕрен тăвас ĕç пурнăçланĕччĕ. Германи демократилле те мире юратакан государство пулса тăнисĕр пуçне, Европăри мĕнпур государствăсен хăрушсăрлăхне тума май пулĕччĕ. Ку вăл çакна пĕлтерет: Европăри пĕр-пĕр государствăна хирĕç пыракан Европăри государствăсен уйрăм çар ушкăнне туни (халĕ Европа çарĕ тĕкенсĕрне тума хатĕрленни çав ушкăн евĕрлех) Европăри чăн-чăн хăрушсăрлăхпа нимĕн чухлĕ те çыхăнса тăмасть.

Англипе Совет Союзĕ хушшинче 1942 çулта тунă договор, çавăн пекех Франципе Совет Союзĕ хушшинче 1944 çулта тунă договор пурри çинчен те манма юрамасть. Çав договорсем тăрăх, Совет Союзĕпе Англи, çавăн пекех Совет Союзĕпе Франци, Германи милитаризмĕ енчен çĕнĕ агресси пулас пулсан, çав агрессие хирĕç пĕрлешсе кĕрешме обязательствăсем илнĕччĕ. Ку вăл Европăри мĕнпур государствăсен хăрушсăрлăхне тăвас тĕллевсемпе килĕшсе тăрать. Çакăн пек кирлĕ ĕçсем çинчен манни Англипе Францишĕн усăллă япала пулса тăмасть. Совет Союзне илес пулсан, вăл ĕлĕкхи пекех, халĕ те, çак обязательствăсене вăйсăрлатма шутламасть кăна мар, Европăри хăрушсăрлăха тăвас тесе, çĕнĕ майсем пуррипе те шута илме хатĕр тăрать.

Анчах та Англи Правительстви Германи ыйтăвĕ тĕлĕшпе тытса пыракан позици, çӳлте асăннă нотăра та, çавăн пекех унăн малтанхи нотисенче палăрнă тăрăх, Европăри хăрушсăрлăха тăвассипе нимĕн чухлĕ те килĕшсе тăмасть. Мĕншĕн тесен вăл нотăсенче çӳлте кăтартнă обязательствăсене кăна мар, 1945 çулта Потсдамри конференци йышăннă постановленисене те нимĕн вырăнне те хумасçĕ. Вăл обязательствăсемпе постановленисем тăрăх, Англи, США, СССР тата вĕсем çумне хутшăннă Франци пĕрлешӳллĕ вăйпа Германи государствин пĕрлĕхне тума, пĕтĕмĕшпе демократилле Германи правительстви тума, Германипе мирлĕ договор тума калаçса татăлнăччĕ. СССР Правительстви Англи Правительствине çакăн çинчен асăрхаттарма кирлĕ тесе шутлать: Европăри хăрушсăрлăха тăвас шутпа Германи тĕлĕшпе Потсдамри килĕшӳре тĕп шухăшне тĕллевĕсене пурнăçласа пыни питех те кирлĕ ĕç пулса тăрать.

Совет Правительстви халĕ те çапла шутлать: тăватă державăн пĕрлешӳллĕ вăйĕпе кăна Европăри хăрушсăрлăха тума, Хĕвеланăç Германири реваншистсем агрессилле Германи милитаризмне çĕнĕрен [illegible] тем тĕрлĕ тăрăшнине чарма пулать. Ăна пурнăçлас тесен, Англи, Франци, США тата СССР Хĕвеланăç тата Хĕвелтухăç Германи представителĕсемпе пĕрле çакăн çинчен калаçса [illegible]: мире тата Европăри хăрушсăрлăха çирĕплетес шутпа Германи ыйтăвĕнче тухса тăнă тĕп ыйтусене татса [illegible] тепĕр вăхăта хăвармалла мар. Вăл ыйтусем: Германипе мирлĕ договор тăвасси, демократилле, мире юратакан пĕрлĕхлĕ Германи государстви тăвасси.

Çавăнпа та ĕнтĕ çӳлти кăтартнă шухăш-кăмăлсем тăрăх, Совет Правительстви Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен канашлăвĕнче çак ыйтусене сӳтсе явма сĕнет:

Германипе мирлĕ договор тăвасси çинчен тăракан ыйтăва пăхса тухма кирлĕ конференци пухасси;

Пĕтĕм Германири Вăхăтлăх Правительствине туса хурасси тата пĕтĕм Германире суйлавсем иртересси.

Унсăр пуçне, Совет Правительстви Германин вăрçă пирки пулса тухнă ĕçсемпе çыхăнса тăракан финанспа экономика обязательствисене çăмăллатасси çинчен тăракан ыйтăва пăхса тухни кирлĕ пулса тăрать тесе шутланă, халĕ те çапла шутлать.

Малтан та, октябрĕн 18-мĕшĕнче панă нотăра та, Англи Правительстви Германи ыйтăвне татса парас çĕрте питĕ пысăк вырăн йышăнса тăракан ыйтусем тĕлĕшпе хăйĕн шухăш-кăмăлне палăртмарĕ. Ун вырăнне Англи Правительстви çӳлте асăннă канашлура вăл «малтанхи нотăсенче хускатнă ыйтусем тăрăх хăйĕн шухăш-кăмăлне каласа парĕ» тесе пĕлтернипе çырлахрĕ.

Англи Правительстви çакăн пек калани çакна пĕлтерет: вăл, малтанхи пекех, Германи ыйтăвне пăхса тухассине пĕтĕм Германире суйлав иртересси çинчен тăракан ыйтупа улăштарма тăрăшать. Вăл суйлавсене Германи халăхĕ хăй мар, оккупаци влаçĕсем иртерессĕ. Англи Правительстви пĕтĕм Германири демократилле правительство туса хурасси çинчен тăракан ыйтăва ним тăхтаса тăмасăр пăхса тухас ĕçрен пăрăнать. Çавăн пек пĕтĕм Германи правительстви туса хумасăр пĕтĕм Германири ирĕклĕ суйлавсем иртерессине, Потсдамри тăватă держава канашлăвĕ йышăннă тĕп задачăсене—Германие демократилле те мире юратакан государство туса пĕрлештерес ĕçре пулăшу парас задачăна пурнăçлама май килмест.

Бунсăр пуçне, Германи ыйтăвне Европăра хăрушсăрлăх тăвассипе çыхăннă тепĕр ыйтуран уйрăм пăхса тума май килмест. Ку ыйту—вăл Америка Европăри хăшпĕр государствăсен территорийĕсенче çар базисем нумайрах та нумайрах тунă пирки пулса тăнă хару-тăру çинчен тăракан ыйту.

Çав çар базисене Совет Союзĕн тата халăх демократи çĕршывĕсен чиккисене çывăх районсенче нумайрах туни çинчен Совет Правительстви темиçе хутчен те каласа панăччĕ. Çакă вара хăех ку базăсене туни Çурçĕр Атлантика блокĕнче тăракан çĕршывсене хӳтĕлес задачăсемпе нимĕн чухлĕ те çыхăнманнине, вĕсене агрессилле тĕллевсене пурнăçланă чухне усă курма тунине кăтартса парать. Пурте пĕлеççĕ ĕнтĕ, Америкăн çав базисене Англи, Франци, Итали, Турци, Норвеги тата ытти чылай çĕршывсен территорийĕсенче тунă. Нумай пулмасть Греци территорийĕнче Америкăн çĕнĕ çар базисене тăвас пирки килĕшӳ тунă, çакă вара Греци халăхĕн нацилле интересĕсемпе пачах çыхăнса тăмасть. Европăра Америкăн çар базисене тăвасси мĕн чухлĕ анлă сарăлни çак фактран курăнать: юлашки вăхăтра США-па фашистла Испани—нумай пулмасть гитлерла—Германи—майлă тăнă çĕршыв хушшинче килĕшӳ туса алă пуснă. Килĕшӳ тăрăх франкистла Испани çар ĕçĕсем енĕпе Çурçĕр Атлантика блокĕнчи çĕршывсен ушкăнĕн союзникĕ пулса тăрать тата хăйĕн территорине Америкăн тинĕс-çарĕпе сывлăш-çарĕн базисене тума парать. Çакăн пек çĕнĕ фактсем хыççăн, Çурçĕр Атлантика блокăн тĕллевĕ хăйне хӳтĕлесси пулать тесе, никам та çирĕплетсе калама пултараймасть.

Бунсăр пуçне, Европăри хăшпĕр государствăсене, çавăн пекех Çывăх Хĕвелтухăçĕпе Вăтам Хĕвелтухăçĕнчи хăшпĕр государствăсене, сăмахран, Ирана, тăкăшах тата уççăнах хытă хĕсеççĕ, вĕсене ирĕксĕрлесех хăйсен территорийĕсене ют çĕршывсен çар базисем тума партарасшăн. Кун пек базăсене агрессилле ĕçсене пурнăçлама тунине, вĕсене тума ирĕк пани çав çĕршывсен наци суверенитечĕпе тата никама пăхăнманлăхĕпе килĕшсе тăманнине асăннă государствăсенчи анлă общественность ăнланать, çавăнпа та çар базисем тума ирĕк парассине хирĕç законлă протестлет.

Асăннă çар базисене тăвасси халĕ Хĕвеланăç Германие çĕнĕрен милитаризацилес тĕлĕшпе тăвакан ĕçсемпе тӳрех çыхăнса тăрать. Ку ĕçсене Хĕвеланăç Германи территорийĕнчен Германин хĕвеланăç пайĕнчи милитаристсен иртнĕ вăрçă парăнтарнăшăн тавăрас тĕллевĕсене, çавăн пекех тата Çурçĕр Атлантика блокĕн агрессилле планĕсене пурнăçлама хатĕрленмелле тата пурнăçа кĕртмелли плацдарм туса хурас шутпа тăваççĕ.

Европăри, Çурçĕр Африкăри, Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи тата Вăтам Хĕвелтухăçĕнчи чылай государствăсен территорийĕсенче ют çĕршывсен çĕнĕ те çĕнĕ базисене организацилеççĕ тата Хĕвеланăç Германие çĕнĕрен милитаризацилемелли планĕсене пурнăçлаççĕ. Кун пек хару-тăру Совет Союзĕшĕн, çавăн пекех тата ытти чылай государствăсемшĕн хăрушлăх туса хунине [illegible], çакă тĕнчери хару-тăрăва тата ытларах [illegible].

Çакна шута илсе [illegible] Германи ыйтăвĕсене Европăра [illegible] тата [illegible] пулĕччĕ.

([illegible])

# Совет Правительстви Англи, Франци тата США Правительствисене Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен канашлăвне пухасси çинчен панă нота

(Юлашки).

Çапла май Совет Правительстви Англи правительствинчен, çавăн пекех тата США-па Франци правительствисенчен акă мĕн пирки ăнлантарса пама ыйтасшăн: вĕсем Германи ыйтăвне тăватă державăн министрĕсен канашлăвĕнче сÿтсе явма хатĕр пулни çинчен тунă заявлени тата вĕсем Европăра хăрушсăрлăх туса хунин пысăк пĕлтерĕшне йышăнни çавăн пек хару-тăру патне—пĕр енчен, канашлура Германи ыйтăвне пăхса тухма сĕнес, теприш енчен, çав вăхăтрах, Парижра тата Боннра тунă килĕшÿсене халиччен çирĕплетмен государствăсене çирĕплеттерес тĕллевпе мерăсем йышăнас хару-тăру патне—илсе пырас çук-и? Çаксем пирки ăнлантарса пани кирлĕ, мĕншĕн тесен çакă асăннă килĕшÿсене çирĕплетни тата вĕсем вăя кĕни Германие çĕнĕрен пĕр государство туса хума май памасть, çавăн пирки Германи ыйтăвне тăватă державăн Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен канашлăвĕнче сÿтсе явни усăсăр пулма пултарать. Мĕншĕн тесен çавăн пек канашлăвăн ĕçне виçĕ держава тата Бонри Аденауэр правительстви Хĕвеланăç Германие Çурçĕр Атлантика блокне кĕртес тĕллевпе тата Хĕвеланăç Германири реваншистла çарне тăвас тĕллевпе хăйсем малтанах йышăнса килĕштернĕ обязательствăсем чармантăрса тăма пултараççĕ.

Çÿлерехре каланисенчен акă мĕн курăнать: тĕнчери татса пама вăхăт çитнĕ ыйтусене йĕркелеме чăнниех тăрăшас пулсан, тĕнчери çĕршывсем хушшинчи йывăрлăха çăмăллатас тĕллевпе мĕнле ĕçсем тăвасси çинчен пĕр тăхтаса тăмасăрах калаçса татăлни кирлĕ, пилĕк державăн канашлăвне пухасси вара çапла туха хушать. Асăннă ĕçсене тăвасси çинчен сÿтсе явни Германи ыйтăвне татса парас ĕçе те çăмăллатассине шанма пулать, çав ыйту Европăра хăрушсăрлăх тăвас ыйтупа тачă çыхăнса тăрать.

Çÿлте каланисене шута илсе, Совет Правительстви сентябрĕн 28-мĕшĕнче панă хăйĕн нотинче Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен канашлăвне пухма сĕннине тепĕр хут çирĕплетсе калать, çав канашлура çак ĕçсене тума сĕнет:

1. Англин, Францин, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен, Китай Халăх Республикин, Совет Союзĕн Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен канашлăвĕнче тĕнчери çĕршывсем хушшинчи йывăрлăха çăмăллатас тĕллевпе мĕнле ĕçсем тăвасси çинчен пăхса тухмалла.

2. Англин, Францин, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен тата Совет Союзĕн Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен канашлăвĕнче Германи ыйтăвне, çавăнпа пĕрлех канашлăва хатĕрленĕ май панă мĕнпур сĕнÿсене те, сÿтсе явмалла.

Англи Правительстви Австрипе договор тăвас ыйтăва хускатнă май, Совет Правительстви çавăн çинчен аса илтерме кирлĕ тесе шутлать: вăл Англи Правительствинчен, çавăн пекех Франципе США Правительствисенчен хăй çак ыйту тăрăх августăн 28-мĕшĕнче панă нота пирки ответ кĕтет тата çак ыйтăва Совет Правительстви ялахи дипломатилле йĕркепе сÿтсе явма сĕнни халиччен пурнăça кĕменнине палăртать.

Совет Правительстви çавăн пек нотăсене Франципе США Правительствисене те ярса парать.

# Октябрьти революци 36 çул тултарнине урăх çĕршывсенче уявлани

Этемлĕх историйĕнче çĕнĕ тапхăр уçса панă Октябрьти Социализмла Аслă революци 36 çул тултарнине Совет Союзĕнчи халăхсемпе пĕрле малта пыракан мĕнпур этемлĕх уявларĕ.

Çак чаплă уява Китай Халăх Республикинчи тата халăх демократи çĕршывĕсенчи ĕççыннисем савăнăçлă ирттерне. Ноябрĕн 7-мĕшĕнчен чылай малтан ку çĕршывсенче Октябрь уявĕ умĕнхи социализмла ăмăрту анлăн сарăлнă. Ăмăртăва хутшăнакансем Октябрьти революци 36 çул тултарнине ĕçре чаплă çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илнĕ. Польшăра, сăмахран, ултă çуллăх плана вăхăтра туса пĕтерме вăйăнса çитĕнÿсем тунипе вăхатра кăтартнă чылай предприятисем, вăл шутра çĕршыври чи пысăк электростанци «Меховице» электростанцийĕ—ĕçлеме пуçланă. Электростанцие уçнă ятпа ирттернĕ митингра Польшăри Министрсен Совечĕн председателĕн заместителĕ Ярошевич сăмах туха каланă. Вăл çапла каланă:

— Октябрьти революци çĕнтернипе пула, Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕпе совет власне пула, империализма тата фашизма хирĕç пынă кĕрешÿре Совет Союзĕ историлле çĕнтерÿсем тунипе пула, эпир паян ирĕклĕ те никама пăхăнман çĕршывра пурăнатпăр, чаплă социализмла пуласлăха, халăхăн телейне ырă пурнăçне куратпăр.

Чехословакири, Венгрири, Румынири тата ытти халăх демократи çĕршывĕсенчи ĕççыннисем Октябрь уявĕ ячĕпе тунă ĕçри çитĕнÿсем çинчен савăнăçлăн пĕлтернĕ. Çак çĕршывсенче вĕсемпе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх уйăхлăхĕсем пулса иртнĕ. Туслăх уйăхлăхĕсенче ĕççыннисем социализм çĕнтернĕ çĕршыва хĕруллĕн юратнине тата чун-чĕререн вăранса тăнине тепĕр хут кăтартса панă.

Уяв кунĕнче Китай Халăх Республикинчи предприятисемпе учрежденисенче Октябрьти революци ячĕпе пухусем пулса иртнĕ. Çĕршыври нумай хуласемпе ялсенче Совет Союзĕн çитĕнĕвĕсем çинчен каласа паракан выставкăсем уçăлнă. Республикăри театрсенче совет кинофильмĕсене кăтартнă. Кинофильмсене ĕççыннисем пите юратса пăхаççĕ.

Пекинри чаплă ларура сăмах илсе, Китайпа Совет Союзĕ хушшинчи туслăх обществин председателĕн заместителĕ У Юй-чжан çапла каланă: «Совет Союзĕн социализмпа коммунизм строительствинчи çитĕнĕвĕсем Китай халăхĕшĕн хăйĕн Тăван çĕршывĕн строительствинче чаплă тĕслĕх пулса тăраççĕ. Китайпа Совет Союзĕ хушшинчи халăхсен аслă туслăхĕ пирĕн çĕршывăн строительствине хăвăртлатмалли çирĕп шанчăк пана мар, çавăн пекех пĕтĕм тĕнчери мире хÿтĕлесе хăварас ĕçре хăватлă вăй пулса тăрать».

«Женьминьжибао» хаçат «Октябрь революцийĕн çутти пирĕн малашнехи çула çутатса тăрать» ятлă статьяра, пĕтĕм Китай халăхĕн шухăш-кăмăлне палăртса, çапла çырать: «Совет халăхĕ Китай халăхне кулленех пулăшса тăрать. Китай халăхĕ совет халăхĕ пур енчен те, чылай вăхăт хушши, ырă кăмăлпа тата этемлĕх историйĕнче халиччен пулман пек пулăшса тăнине никçан та манмĕ. Пирĕн халăх Китайпа Совет Союзĕ хушшинчи пĕр-пĕрипе килĕштерсе ĕçлессинĕ тата туслă союза çирĕплетсе пыма, совет халăхĕпе тата çирĕпрех пĕтĕçме, Октябрьти Социализмла Аслă революци кăтартса панă çулпа хăюллăн утма яланах хатĕр».

Ноябрĕн 7-мĕшĕнче ирех совет посольстви Варшавăри çуртне ĕççыннисен пысăк делегацийĕсем пыма пуçланă. Делегацисем совет халăхне уяв ячĕпе тăванла саламланă тата коммунизм строительствинче çĕнĕ çитĕнÿсем тума ырă суннă. Польшăна ирĕке кăларассишĕн пынă кĕрешÿре хăйсен пуçне хунă совет воинĕсен вилтăприсем çине чечек хушă хĕсем хунă.

Октябрьти Социализмла Аслă революци 36 çул тултарнă ятпа Чехословаки республикинчи хуласемпе ялсенче ĕççыннисен нумай пысăк митингĕсем пулса иртнĕ. Чехословакири рабочисемпе хресченсем, интеллигенци Совет Союзĕнчи халăхсене чун-чĕререн саламланă, пилĕкçуллăхăн юлашки çулĕнчи плана срокчен пурнăçлас тесе тата хайăхрах ĕçлеме тупа тунă.

Венгри столицинче — Будапештра Венгрири ĕççыннисен партийĕн Центральнăй Комитечĕн тата Министрсен Совечĕн чаплă ларăвĕ пулса иртнĕ. Ларура пулнă çынсем совет халăхне унăн национальнăй уявĕн кунĕ ячĕпе тăванла салам янă. Октябрьти революци 36 çул тултарнине палăй туса, «Сабад неп» хаçат çапла çырнă: «36 çул каярах совет халăхĕ кĕрешÿре ирĕклĕх çĕнсе илчĕ. Паян çак ирĕклĕх çĕршер те çĕршер миллион çынсен пуянлăхĕ пулса тăрать. Вăл ирĕклĕхе халăхсенчен никам та туртса илеймĕ. Çавăн пек тĕпрен улшăннă тĕнчере пирĕн Тăван Венгрири ĕçхалăхĕ те телей çулĕпе пырать».

Октябрьти революци 36 çул тултарнине Румыни халăхĕ савăнăçлăн та чаплăн палă тунă. Бухарестра И. В. Сталин площадĕнче ĕççыннисен нумай пин çынлă демонстрацийĕпе митингĕ пулса иртнĕ. Трибуна çинче Румынири рабочи партийĕн руководителĕсем тата Г. Георгиу-Деж ертсе пыракан правительство членĕсем, Румынипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх уйăхлăхне хутшăнма Румыние килнĕ совет делегацийĕн членĕсем пулнă. Нумай çынлă пухусемпе митингсем çавăн пекех республикăри ытти хуласемпе ялсенче те пулса иртнĕ.

Болгари столицинче — София хулинчи ĕççыннисен демонстрацийĕ виçĕ сехет ытла пынă. Болгарири Коммунистсен партийĕпе правительство руководителĕсем Г. Димитров мавзолейĕ çинче тănă, мавзолей умĕпе 250 пин çын ытла утса иртнĕ. Октябрь революцийĕ ячĕпе ирттернĕ уявсем çавăн пекех Пловдив, Сталин хулисенче, Русе, Бургас, Плевен тата çĕршыври ытти хуласенче те пулса иртнĕ. Çак кунсенче Болгари халăхĕ Совет Союзĕнчи халăхсемпе никам аркатайми çирĕп çыхăну тытнине тата туслă пулнине уйрăмах хытă палăртнă.

Октябрьти революци 36 çул тултарнă ятпа ирттернĕ пухусем, митингсемпе демонстрацисем Албанире, Демократиллĕ Корея Халăх Республикинче, Монголи Халăх Республикинче тата Демократиллĕ Германи Республикинче пулса иртнĕ.

Октябрьти революци 36 çул тултарнине капитализмла çĕршывсенчи ĕççыннисем те анлăн палăртнă. «Итали—СССР» обществи пуçарнипе, Италири тĕрлĕ провинцисенче митингсемпе пухусем ирттернĕ. Унта хутшăннă çынсем Италипе Совет Союзĕ хушшинчи экономикăлла тата культурăлла çыхăнусене çирĕплетме чĕнсе каланă.

Совет Союзĕн Индири посольствине Инди общественноçĕн представителĕсем, рабочисен делегацийĕсем пынă. Вĕсем Индипе Совет Союзĕ хушшинчи çыхăнусене çирĕплетме кирлине пĕр хыççăн пулса палăртнă.

Январири «Ас-Сарта» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Октябрьти Социализмла Аслă революци 36 çул тултарнă ятпа Сирире нумай çынлă пухусем пулса иртнĕ.

Октябрьти революци 36 çул тултарас умĕн Монтевидео хулинчи (Уругвай) рабочисен, прогрессивлă организацисен тата интеллигенци представителĕсен нумай çынлă пухăвне ирттернĕ. Пухура Уругвайпа Совет Союзĕ хушшинчи культурăлла çыхăну институчĕн секретарĕ Линдия Часало сăмах каланă. Вăл Уругвайри общественноçа Октябрьти революци 36 çул тултарнине уявланине миршĕн тата Совет Союзĕ хушшинчи туслăха çирĕплетессишĕн кĕрешмелли кун туса хума чĕннĕ.

Осло хулинчи чаплă ларура Октябрь революцийĕ çинчен Норвегири паллă артист Уле Грепп доклад туса панă. Вăл çапла каланă: «Эпир хамăр çĕршывра, миршĕн ĕмĕтленекенсем тата уншăн тăракансем, çав аслă кун пирĕн малашлăха та кăтартса паракан совет çынние салам яратпăр».

Грецири «Авги» хаçат уяв кунĕнче тухнă номерте çапла çырнă: «Халĕ никам та ĕнтĕ Совет Союзĕ экономикăпа культура тĕлĕшне тунă аслă çитĕнÿсене йышăнмасăр тăма пултараймĕ. Вăл çитĕнÿсем чăннипех те пысăк. Совет халăхĕ, хăйĕн çитĕнĕвĕсемпе тĕнчери цивилизацие хÿтĕлесе, фашизма пĕтерессишĕн пынă кĕрешÿре питĕ пысăк сухатусем тÿсрĕ. Совет Союзĕ 36 çул тăршшĕпех мир ĕçĕшĕн çирĕп тăчĕ. Тĕнчери çивĕч ларутăрăва çăмăллатассишĕн пуçарнă кирек мĕнле ĕçе те социализм çĕршывĕ хÿтĕлет. Совет халăхĕ тĕнчери мĕнпур хирĕçÿсене татса памалли тĕрĕс çула кăтартса парать. Ку вăл акă мĕншĕн пулать: Совет Союзĕн политики—мĕнпур халăхсем хушшинчи пĕрганлăх политики».

Францири «Юманите» хаçат, Совет Союзĕ тунă пысăк ÿсĕмсене тата унăн мире юрататан тулашри политикине палăртса çапла çырнă: «Французсем тепĕр хут татăклăн тупа туса калаççĕ: «Франци халăхĕ никçан та Совет Союзне хирĕç вăрçă вăрçмĕ»».

Октябрьти революци 36 çул тултарнине Демократиллĕ Вьетнам Республикинчи ĕççыннисем те анлăн палă тунă. «Вьетнам халăхĕ,—тесе çырать «Нян Дан» хаçат,—хăйĕн кĕрешĕвĕнче пĕччен мар, мĕншĕн тесен Совет Союзĕ ертсе пыракан мир, демократи, социализм лагерĕ ăна пулăшса тăрать. Совет Союзĕ Вьетнам халăхĕн тĕрĕслĕхлĕ кĕрешĕвĕ маллă тăрать».

Октябрь уявне мĕнпур çĕршывсенчи тата континентсенчи миллионшар та миллионшар ĕççыннисем палăртнă. Совет халăхĕ çĕнсе илнипе, унăн этемлĕх телейĕшĕн, çирĕп те нумай вăхăта пыракан миршĕн пыракан кĕрешĕвĕнче вĕсем хăйсен çутă малашлăхĕн шанчăкне курса тăраççĕ.

Уяв кунĕсенче Польшăра, Чехословакире, Венгрире тата ытти халăх демократи çĕршывĕсенче çак çĕршывсене фашистла чуралăхран хăтарассишĕн хăйсен пурнăçне панă совет воинĕсен вилтăприсем çине чечек кăшăлĕсем хунă.

Совет посолĕсем тата посланникĕсем Октябрьти Социализмла Аслă революци 36 çул тултарнă ятпа йышăнусем туса ирттернĕ. (ТАСС).

# Ача çурчĕсен ĕçне лайăхлатар

Пирĕн çĕршывра çамрăк ăрăва пăхса ÿстерессе пĕтĕм ĕççыннисен тивĕçĕ пулса тăрать. Ашшĕ-амăшĕсĕр юлнă ачасем ятарласа уйăрнă çуртсенче—ача çурчĕсенче—ÿсе çитĕнеççĕ. Вĕсем унта тăван килĕнче пурăннă пекех шкулта вĕренеççĕ, çав вăхăтрах тĕрлĕрен усăллă ĕçе хăнăхса, промышленноçпа ялхуçалăх производствинче тата культура фронтĕнче ĕçлеме юрăхлă пулма тăрăшаççĕ.

Ачасен çуртĕнче вĕрентÿпе воспитани ĕçне йĕркеллĕн тата ăнăçлăн туса пырасси, вырăнти парти, совет тата общественнăй организацисен пулăшнинчен нумай килет. Вĕсен ачасем мĕнле пурăннине, шкулта мĕнле вĕреннине асăрхаса тăмалла, пуша вăхăта савăнăçлăн та усăллă ирттерме кирлĕ условисем туса памалла.

Кашни ача çурчĕ çумĕнче попечительски советсем пур. Вĕсем пуçарнипе чылай промышленность предприятийĕсем, колхозсем тата ытти общественнăй организацисем, шефсем пулса, ача çурчĕсене пысăк пулăшу параççĕ. Кÿкеçри ача çуртне шефа илнĕ организаци кашни çулах вутă турттарса парать, пурăнмалли çуртсене юсама пулăшать. Ача çуртĕнче час-часах спектакльсем кăтартаççĕ.

Сĕнтĕрвăрринчи спирт заводĕн коллективĕ çуллахи хулари ача çурчĕн воспитанникĕсем валли пионерсен лагерьне уçма пулăшать.

Анчах кун пек тĕслĕхсем сахал-ха. Куславкка, Калинино, Комсомольски районĕсенче ача çурчĕсене общественнăй пулăшу парассине йĕркелемен. Пăрачкав районĕнчи ача çурчĕ çумĕнчи попечительски совет хут çинче анчах шутланса тăрать. Унăн председателĕ (вăлах районти Совет исполкомĕн председатель заместителĕ) А. М. Теребилов юлташ ку ответлă ĕçе йĕркелесе ярасси çинчен шутласа та пăхман. Буинскри ачасен çурчĕн шефĕ—комсомолăн Канаш хула комитечĕ. Анчах унăн работникĕсем ачасен çуртĕнче пулса та курмаççĕ. Çавăн пекех Комсомольски районĕнчи Çĕнĕ Кипечри ача çурчĕн шефĕ пулса тăракан Чăваш педагогика институчĕ те ку ача çуртне нихăш енчен те пулăшмасть. Çапла пулать, Çĕнĕ Кипечри ача çуртĕнче çамрăксене вĕрентес тата воспитани парас ĕçре пысăк çитменлĕхсем пур. Çĕнĕ Кипечри ача çурчĕн пĕтĕм ĕçне лайăхлатма халех пулăшмалла.

Вырăнти çутĕç пайĕсен пур ача çурчĕсем çумĕнче те попечительски советсем тумалла, вĕсене ĕçлеме тытăнтармалла. Попечительски советсем пуçарнипе тăлăх юлнă ачасене вăхăтра шута илсе вĕсене ача çурчĕсене вырнаçтармалла е колхозран пулăшу пама тăрăшмалла. Пирĕн çамрăк ăрăва лайăх пăхса ÿстерме тата ача çурчĕсен материальнăй базисене кулленех-кун тĕреклетме пулăшмалла, вĕсен ĕçсене тĕрĕслесе тăмалла.

В. АРСЕНТЬЕВ,
Чăваш АССР Çутĕç министерствин инспекторĕ.

# Халăха кирлĕ таварсем туса кăларасси ÿсет

КУСЛАВККА. Райпромкомбинат 10 уйăхри плана 115 процент тултарчĕ, планран ирттерсе 55 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларчĕ.

Социализмла ăмăртура çăмă сураканă, урапа-çуна тăвакан цехсем мала тухрĕç. Планран ирттерсе туса кăларнă продукцин пысăк пайĕ çак цехсене тивет. Юлашки вăхăтра промкомбинат çуртсем тăвакан заводăн кашшĕсемпе усă курса, халăха кирлĕ çĕнĕ таварсем туса кăларма тытăнчĕ.

Социализмла ăмăртура нумай работниксем стахановла ĕçĕн тĕслăхĕсене кăтартаççĕ. Урапа-çуна цехĕнче П. Переведенцев, Я. Иванов тата Т. Комаров мастерсем сменăри нормăна 150—170-шер процент тултараççĕ. Хăма суракан цехри Т. Рябинин рамщик та тухăçлă ĕçлет.

Çак кунсенче пирĕн коллектив СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ «Куллен кирлĕ промышленность таварĕсем туса кăларассине ÿстерессĕ тата вĕсен пахалăхне лайăхлатасси çинчен» йышăннă постановленипе сÿтсе ячĕ. Партипе правительствăн постановленийĕпе хавхаланса, коллектив комбинат ĕçне малалла лайăхлатма пулăшакан организациллĕ-техникăлла ĕçсем туса ирттерме палăртрĕ, çулталăкри плана декабрĕн 5-мĕшĕ тĕлне тултарма пулчĕ.

С. ЕФИМОВ,
промкомбинат директорĕ.

# Журналсем сарас ĕçе лайăхлатмалла

КОМСОМОЛЬСКИ. Кăçал районта «Ялав» журнала 125 экземпляр сармалла пулсан, 74 экземпляр, «Тăван Атăл» альманаха—100 экземпляр сарас вырăнне—56 экземпляр кăна сарнă. Çыхăну канторĕ асăннă журналсене халăх хушшине сарас тĕлĕшпе почта уйрăмĕсен начар ĕçленипе килĕшсе тăрать. Аслă Çĕрпуелĕнчи почта уйрăмне вĕрезен ялсенче 440 хуçалăх шутланать. Вĕсенче «Ялав» журнала пурĕ те икĕ çемье кăна илсе тăрать, «Тăван Атăл» альманаха икĕ ялта пĕр çын та илмест.

Чăвашла туса тăракан илемлĕ литература журналĕсене халăх хушшинче сарас ĕç ялăх пынипшĕн, пирĕн шутпа, Чăваш совет писателĕсен Союзĕн правленийĕпе асăннă журналсен редакцийĕсем те айăплă. Журналсем сарас ĕçе редакцисен сотрудникĕсемпе писательсен Союзĕн правленийĕн работникĕсем те хутшăнмалла, вырăнсене тухса отчетсем ирттермелле. Анчах та Комсомольски районĕнче лекцисемпе докладсем, творчествăлла каçсем ирттерни юлашки 3—4 çул хушшинче пĕрре те пулман.

«Ялав» журналпа «Тăван Атăл» альманах çаплах-ха кая юлса тухаççĕ. Вулакансене çакă та нумай пăшăрхантарать.

Халĕ пур çĕрте те 1954 çулшăн хаçат-журнал сарасси пырать. Анчах пирĕн районта «Ялав» журналпа «Тăван Атăл» альманаха сарасси çителĕксĕр пырать.

Л. ТАЛЛЕРОВ.

# Учительсем активлăн çырăнаççĕ

КУБЕС. Районти предприятисемпе учрежденисенче, колхозсенче, шкулсенче 1954 çулшăн хаçат-журнал сарас ĕçе почтальонсемпе çыхăну уйрăмĕнчи работниксем, колхозла ялсенчи активистсем хастарлă хутшăнаççĕ.

Ĕççыннисем хушшинче хаçат-журнал сарас ĕçĕпе Толик-Хураски çыхăну уйрăмĕпе Шăмăшри çыхăну агентстви малта пыраççĕ. Вĕсенче ĕçлекенсем подписка пуçланнă хыççăн малтанхи эрнерех çитес çулшăн хаçат-журнал сармалли плана тултарчĕç.

Лапсарти çыхăну агентстви çак ĕçе общественнăй уполномоченнăйсене анлăн явăçтарнă. Çичĕ çул вĕренмелли шкулти общественнăй уполномоченнăй П. Иванов юлташ учительсемпе вĕренекенсем тата служащисем хушшинче 3 пин тенкĕлĕх ытла тĕрлĕ хаçат-журнал сарнă. Çак шкулта ĕçлекен Н. Саушкина юлташ—210 тенкĕлĕх, Н. Терюшкин юлташ—240 тенкĕлĕх е 9-шар экземпляр тĕрлĕ хаçат-журнал илме çырăннă.

А. ТИМОФЕЕВ.

# ПĔЛТЕРÜ

Ноябрĕн 10-мĕшĕнче, 19 сехетре, КПСС хула комитечĕн библиотека çуртĕнче вĕренмелли тата иккĕмĕш çул ĕçлекен политшкулсен руководителĕсен семинарĕсенче занятисем пулаççĕ.

Семинар руководителĕсем—З. В. Кустарникова тата А. П. Николаев юлташсем.

КПСС ХУЛА КОМИТЕЧĔ.

# Сăр вăрманĕнче

Вăрçунекки сĕм вăрман. Сăмсана пÿрĕ çĕрĕк, тĕтĕм шăрши кĕрет. Халтара мăн йывăçсем кĕрĕслетсе ÿкнĕ, электростанци кĕрлевĕ сасă янăраса тăрать.

Куçа çĕрекен электростанци механикĕ çулахай алли çумне çыхнă сехет çине пăхрĕ. Сехет йĕпписем вунвиккĕ тĕлне çитнине курсан, йывăр мăлатук илсе йывăçран çакнă буфера шаккама пуçларĕ. Станцинчен энерги илсе тăракан электропăчкасем кăмăлсăр пулнă пек улаша ирчĕç. Пăртакран вĕсен сассисем те хăп лăпланчĕ.

Вăрăнсе тăракан вăрман шăпланчĕ. Ултавкка йывăç хуппи айĕнчи шĕкке такăнаттарса сĕтнĕ сасă та сăйра хутра кăна илтĕнмест.

Вăрман касакансем ĕç пăрахса электростанци патне пухăнчĕç.

Ирхине çил ичĕ палăрмалла мар çăра тĕтре вăрманти йывăç-курăка, тунтире мăрлентерсе хăварчĕ. Шăртах тăрсан, тĕтре сÿлелле сĕкленчĕ: Хадĕ кайнах çумăр çума пуçларĕ. Электростанци патне пухăннă çынсем çумăртан пытанма вăрмана кăварнă шăрăш енчелле чупрĕç.

— Эх, буклĕчĕ çакăнта,—терĕ чăрăш айне ытти... [illegible] Дубов моторист.

— Ав васка хăне кĕрсен пулать,—[illegible] отвечлерĕ [illegible] Игнатьев.

[illegible]

чен патакпа çĕрулли турта-турта кăларнă хушăра çунса вырткан кăвайт тавра çавăрăнса ларма сĕнчĕ Петров механик.

— Мана та пĕрер çĕрулми памăрши?—ыйтрĕ тин кăна вĕсен ушкăнне хутшăннă Захаров тракторист. — Вĕри çĕрулми çисен, тен, кăшт ăшăнăп.

Пурте çумкисенчен тăварпа çăкăр кăларса çĕрулми çиме пуçларĕç.

— Вăрçăра вутлă çумăр çунă чух та кăнтăрла вĕри апат çитереччĕç пире,—çăвăрĕнчи вĕри çĕрулмине сăтса ярса каларĕ Дубов.

— Мĕн шăртланса кăна тăратăн эсĕ паян?—кăмăлсăр пулчĕ Игнатьев.

— Тĕрĕссипе каласан эпĕ, шăртланнипе мар. Котлопункт, котлопункт, теççĕ. Ăçта вăл котлопункт?

— Çиесен çук, çавăнпа уçмасçĕ ăна,—ыйтăнчĕ пĕрин сасси.

— Епле çиесен çук? Эсĕ çиме пултараймастăн-и? — парăнасшăн пулмарĕ Дубов.

— Эсĕ кунтан пилĕк километртри пункта кайса çиетĕн-и?

— Сĕмăрхери вăрманпромхозра апата вăрман касакансем патне тераспа илсе кайса çитереççĕ. Пирĕн мĕншĕн вĕсем пек тума юрамасть? ОРС-ра рабочисем çинчен шухăшламаççĕ. Çавăнпа, уйăхне пин çурă тенкĕ ĕçлесе пулсан та, кăнтăрла кăшăл апат ыранне тивĕçлĕ çĕрулми çитереççĕ мар.

— Укçине эпир те çавнах илместпĕр-ха,—сăмах хушрĕ Захаров.

[illegible]

рĕç. Вăсса сайрарах йывăçсем хушшипе пĕр кас çил çаврăнса кĕчĕ те, кăвайта тĕрлĕ енчен вĕрсе ăмăлантарчĕ. Чĕрĕ вутпуççисем шартлатса çунма пуçларĕç. Йĕри-тавра ларакансем алăпа куçĕсене хупăрласа каялла чакрĕç.

— Енер кам лекцире пулнă?—вутпуççи илсе чикаркка тивертнĕ май ыйтрĕ Захаров.

— Эсир пулаймарăр-им? — ответлес вырăнне ыйтрĕ механик Петров.

— Кино пуçланас умĕн тин çитрĕм çав. Лекци мĕн çинчен пулчĕ?

— Энергетика аталанăвĕ çинчен.

— Мĕнле вăл вăрманти стахановецсен опычĕ çинчен пĕр лекци те тумаççĕ.

— Эсĕ тĕрĕсне каларан-ха. Анчах эсир, трактористсем çитмĕл лекци ирттерсен те çул хĕррине кăларнă йывăçсене нормăна тултараймастăр,—каласа тÿсмесĕр каларĕ Дубов.

— Эпĕ нормăна 106 процент тултарнă,—кÿренсе пек пулчĕ Захаров.

— Сăмах ыттисем çинчен пырать. Вĕсем мĕншĕн тултармаççĕ? — тĕкелесех ыйтма пуçларĕ Дубов.—Эсир нормăна тултарман пирки эпир касса çирĕм пин кубометр йывăç вăрманта çĕрсе выртать. Çул хĕррине кăларнă йывăç сукран автомашинăсем ахаль ларасçĕ. Чугун çул хĕрринчи склатра, шăпăрпа шăлса тасатнă пек, пĕр сукмак вутă тупма çук. Вăрманпромхоз вагонсене вăхăтра тиесе ĕсатаймасан пирки штраф тÿлесе пысăк тăкак курать. Игнатьева та, шăлнĕ патне кайсан, шахтерсем хытă ятланă,—сăмах май шÿт туса илчĕ моторист.—Вот плана тултар, продукци хакне чакар вара...

— Фу-фу!—тутине çĕрĕ пек туса шăхăрчĕ тракторист.—Ытла калаçакан пулса кайнă эсĕ паян.

— Эпĕ кăнтăрлачченех пĕр норма тултарăп. Каçчен тепре тăвасшăн. Çавăнпа ... тарать. Эсĕ те ик норма тултар. Килĕшетĕн-и?

— Сан сăмахупа калаçма пулать, — Дубов [illegible] — Захаров. —Анчах пиртен килмен сăлтавсем нумай чăрмантараççĕ трактористсене. Енер, хăвăрах пĕлетĕр, пĕр болт татăлса кайрĕ. Ăна шырама вунпилĕк километртри автобазăна çуран кайса килсе кун иртертĕм. Трактор тăрать,—кун ниро кĕтмест, иртет вăл. Куçа çÿрекен мастерской пулсан, çийĕнчех килсе юсаса панă пулĕччĕ те çав...

— Апла пулсан, тăвас пулать ăна.

— Машинăсен ĕçне тĕрĕс йĕркелесен техникăна пĕлекен çынсем хартиасăр пулмасть вăл.. Малта пыракансен месечĕпе усă курасси çинчен мĕн чухлĕ калаçатпăр эпир? Тепĕр чухне вăрманпромхозсенче малта пыракан трактористсем мĕнле ĕçленипе те кайса куратпăр. Усси пур-и? Çук! Мĕншĕн тесен пирĕн руководительсем техникăна пĕлмен пирки вĕсемпе усă курмалли условисем туса памаççĕ.

— Пĕркесĕрлĕх, калама та çук, ытлашшипех ĕнтĕ,—пăртак шухăшласа ларнă хыççăн калаçа калама пуçларĕ Дубов.—Халĕ пирĕн патăмăра колхозниксем договорпа ĕçлеме килчĕç. Вĕсем ытларах усă паччăр тесен, пайлах пĕр-пĕр специальноçа вĕрентме тытăнмалла ĕнтĕ. Сук вĕт, ун çинчен шухăшламаççĕ. Паян пĕр çĕре, ыран тепĕр тĕле ярса çынсене пуçăрăнса ĕçлеме чараççĕ. Договорпа килнĕ çынсем çине те ĕлĕк колхозсенчен сезон вăхăтĕнче килнисем çине пăхнă пекех пăхаççĕ.

— Çавăнпа хăшпĕрисем ĕçлеме тытăнсанах каялла каясси çинчен калаççĕ ĕнтĕ,—терĕ Дубов каласнине тĕнчĕсе ларакан Игнатьев.

Аслă çулпа автомашина килсе чарăнчĕ.

— Автокран ĕçне вунтă? — кабина алăкне уçса ыйтрĕ шофер.

— Кварталăн тепĕр енче,—ответлерĕç вăрман хатĕрлекенсем.

— Вăт шуйттансем, кана вунтă тесе вăçĕ, ытла патăнчалах мар кăларятса ятăр! шофер.—Кунта йывăç мĕнпе пулăшма тухаççĕ?

— Турттарассе кĕтеççĕ пулмалла,—пуринчен те ответлерĕ тракторист.

— Бу çулпа турттарăн унта. Куллаве пулать. Увсăрăн çывăхри çĕр çумне шăнса ларать те, хăпартаймасăр тинкеленме тивет. В леш кварталти пек, — алăнне квартал еннелле тăсса кăтартрĕ шофер,—вырттарса хăварса çĕртесшĕн-и ăна?

Шофер автомашинине аран-аран çавăрса автокран еннелле каялла кайрĕ.

— Тĕрĕс калатăр эсир,—ыттисем пуçланă калаçăва малалла тăсрĕ механик.—Техника, техника тетпĕр... Тĕнчере нихăш çĕршывра та вăрман хатĕрлекенсен алăнче пирĕнни пек хăватлă машинăсем çук. Техника куллен малалла каять. Ĕçе организацилесси унпа пĕрле аталанса пыраймасть. Ав мĕнле усă куратпăр эпир машинăсемпе,—тин кайса кайнă автомашина еннелле пăхса илчĕ механик. — Поток, сехет механизмĕ пек тĕрĕс ĕçлекен поток кирлĕ пире. Математика! Вăт мĕн çитмест пире. Кашни минута шутра тытмалла. Электростанци вуçса пынă çĕре участока касма хатĕрлесе хумалла. Электропăчкăпа касние тракторсем çул хĕррине кăларса ĕлкĕрччĕр. Вĕсем çул хĕррине кăларнине автоэлектрокран машина çине тиесе тăтăр. Вăрмантан илсе тухнă йывăçа çавăнтах сортласа вагон çине тиесе ăсатмалла. Кварталта касма тытăнна çĕре унта машинăсемпе кĕме çул хывма тытăнмалла...

—Вара пĕри тепĕрне тата хăвăртрах ĕçлеме хистесе пырать,—хутĕнчĕ сасси.

— Пирĕн потока тĕрĕс йĕркелесе ыйма пур машинăсем те çитеççĕ. Анчах кашни бригада [illegible] ... [illegible] ... Павел ЦЫПЦЦОВ.

Редактор заместителĕ М. Н. ЯКИМОВ.

## ТЕАТР

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ — ноябрĕн 10-мĕшĕнче вырăсла спектакль «Беспокойная должность».

Спектакль 19 сехет те 30 минутра пуçланать.

## КИНО

«УДАРНИК»—ноябрĕн 10-мĕшĕнче çĕнĕ илемлĕ фильм «Мой маленький друг».

Сеанссем пуçланаççĕ: 14 сехет те 15 минутра, 16 с. 15 м., 18 с. 15 м. тата 20 с. 15 м.

Шупашкар хулинче, Карл Либкнехт урамĕнчи 15-мĕш çуртра, пурăнакан Лидия Дмитриевна Лисова уйрăлассишĕн Александр Васильевич Лисовăна хирĕç ĕç пуçарнă. Ĕçе Чăваш АССР Верховнăй Сучĕ пăхса тухать.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—4-17, ответлă секретарь—4-98, секретариат—5-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, [illegible] пайĕ—5-21, ял хуçалăх пайĕ—5-97, культура пайĕ—5-61, совет строительстви пайĕ—5-64, çырусен пайĕ—7-32, издательство вахтерĕ—6-23.

[illegible]

Типографи № 1 Министерства культуры Чувашской АССР. Заказ № 2538. Тираж 30000 экз.